Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 3 ВЫРСАРНИКУН 227 (4739)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Дежурнăйăн 6—23
Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88

Тупăшсене тĕрĕс валеçмеле

Малтанлăха шутланă тăрăх, Пĕтĕм Совет Союзĕпе кăçал тырпул тухăçĕ 7 мĕлйард пăтран ытла пулмала. Сталин йулташ çуллен 7—8 мĕлйард пăт тыр̆ă илмеле тесе панă лозунга пурнăçа кĕртес çул çинче хăйулăн малала пыратпăр.

Пирĕн республикăра кăçал тырпул тухăçлăхĕ иртнĕ çулхинчен чылай пысăк. Вăйлă тырпулшăн кĕрешнин результачĕ куç умĕнче. Пур çĕртен те рекордлă тырпул çинчен, колхозсемпе колхозниксен тупăшĕсем пысăккăн ӳсни çинчен савăнăçлă хыпарсем килеççĕ.

Колцовкăри (Вăрнар р-нĕ) Сталин йулташ йачĕпе тăракан колхозра, вăтамăн шутласан, кашни гектартан ыраш 27-шер центнер, сĕлĕ 35-шер центнер, тулă 32-шер центнер илеççĕ.

„Хĕрлĕ фронтовик“ колхозра (Йĕпреç р-нĕ) уйрăм стахановла бригадăсем гектартан 32—34-шар центнер ыраш туса илнĕ. Çĕмĕрле районĕнчи „Подборный“ колхоз вăтамăн гектартан 23 центнер ыраш, сĕлĕ 23 центнер, тулă 16 центнер, йĕтĕн 4,5 центнер туса илнĕ. Пăрачкав районĕнчи „Красный пахарь“, „Луч“, Ленин йачĕпе тăракан, «Новый путь“ тата ытти чылай колхозсенче тĕштырăсене кашни гектартан 20—22-шер центнер пуçтарса илнĕ.

Кун пек лайăх тĕслĕхсем пирĕн республикăри колхозсенче татах та нумай.

Тырпул тухăçĕ ӳсни — колхозниксен тупăшне ӳстерет. Кĕçĕн Маклашкă йалĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) „Хĕрлĕ çар“ колхозра ĕçкунĕ пуçне 12-шер килограмран кайа мар тĕш тыр̆ă, 15-шер килограм çĕрулми тивмеле. Пăрачкав районĕнчи „Красный пахарь“, „Большевик“, „Луч“, Ленин йачĕпе тăракан колхозсенче ĕçкунĕ пуçне 10—15-шер килограм тĕштыр̆ă илмеле. „Красный пахарь“ колхозра тырпула валеçнĕ чух 600—1000-шер пăт тыр̆ă илекен колхозниксем нумай пулаççĕ.

Вăтайалĕнчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра (Тăвай р-нĕ) Ф. Семйонăв колхозникĕн çемйинче 9 çын, ĕçлеме пултаракании 3 çын. Вĕсем пурĕ 500 ытла ĕçкунĕ тунă. Колхозра ĕçкунĕ пуçне 30-шар кĕренке тĕштыр̆ă валеçме шутланă. Семйонăв çемйине 375 пăт тыр̆ă тивмеле.

Кун пек нумай тыр̆ă туса илнипе акă мĕн калать Семйонăв колхозник:

— Енĕ колхоза кĕриччен уйрăм хуçалăхпа пурăннă чух нихăçан та 60—80 пăтран ытла тыр̆ă туса илмен. Çурма хĕле çитсен сутăн илме пуçланă. Ыр̆ă çипуç тăхăнса курман. Аш-какай та сайра хутра кăна çинĕ. Колхоз пурнăçĕ пачах урăхла. Савăнтарать мана халĕхи пурнăç!— тет.

Колхозниксем суту-илӳ организацисене велосипедсем, çĕвĕ çĕлемели машинсем тата ытти тĕрлĕ паха йапаласем, кĕнекесем илсе килме заказсем параççĕ.

Халĕ йалхуçалăх çулĕ вĕçленсе килет. Колхозсем умĕнче чи ответлă ĕç—тупăшсене валеçес ĕç тăрать. Тупăшсене валеçме тĕплĕн хатĕрленмеле. Тупăшсене ĕç тăрăх валеçес йĕркене çирĕп тытмала.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕнче çапла каланă:

„Ертел тупăшĕсене унăн членĕсем хушшинче ертелĕн кашни членĕ мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунă тăрăх анчах валеçсе параççĕ“.

Çак таса принципа никам та пăсма пултараймасть. Ăна пурнăçа тĕрĕс кĕртес тесен, чи малтанах колхозра ĕçе шута мĕнле илсе пынине тĕплĕн тĕрĕслес пулать.

Колхозсенче ку таранччен çак ответлă ĕç çине кирлĕ пек пăхманнипе çитменлĕхсем чылай пулса пычĕç. Хăшпĕр колхозсенче ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине вăхăтра çырса пыманнипе колхозниксем миçе ĕçкунĕ ĕçлесе илнине пĕлмеççĕ. Вăхăтра çырса пыманнипе колхозниксен ĕçкунĕсене çухатса пĕтернисем те пулаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Енгельс йачĕпе тăракан колхозра колхозниксен ĕçкунĕсене утăсене çулса пуçтарса кĕнĕренне пĕре те çырман. Балтийец колхозра (Çĕрпӳ р-нĕ) икĕ уйăх ытла ĕçкунĕсене ĕç кĕнекисем çине çырман. Хăшпĕр бригадăсенче колхозниксем мĕн чухлĕ, мĕнле пахалăхпа ĕçленине шута илмеççĕ.

Устав тăрăх, ертел правленийĕн кашни уйăхра ертел членĕсем иртнĕ уйăхра мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине кăтартакан спискă кăларса çакмала. Çакна чылай çĕрте пурнăçа кĕртмеççĕ.

Колхоз тупăшĕсене валеçме хатĕрленнĕ май, ертелĕн кашни членĕ миçе ĕçкунĕ ĕçлесе тунине кăтартакан ведомăçе пурне те пĕлтерме, ертелĕн тупăшĕсене валеçнине çирĕплетекен пуху умĕн икĕ эрне малтан, курăнакан вырăна çакмала. Пĕр колхозникпе колхозницă та хăйсем мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине пĕлмесĕр тăни пулмала мар.

Тупăшĕсене валеçнĕ чухне тата уйрăмăнах акă мĕне асăрхамала: уйхир ĕç бригади лайăх ĕçлесе хăй çумне çирĕплетнĕ участкăсенчен колхозра вăтам хисепрен ытларах тухăç илет пулсан, çав бригадăри пур членсене те, вĕсене ĕçлесе тунă мĕн пур ĕçкунĕ çумне, 10 процент таран хушса памала. Уйхир ĕç бригади начар ĕçлесе хăй çумне çирĕплетнĕ участкăсенчен колхозри вăтам хисепрен кайарах тухăç илет пулсан, çав бригадăри пур членĕсенчен те, вĕсем ĕçлесе тунă мĕн пур ĕçкунĕсенчен, 10 процент таран тытса йулмала.

Кăçалхи çул уйхир ĕçĕнче стахановла бригадăсем ӳссех пычĕç, вĕсен ĕç тĕслĕхĕ калама çук паха пулчĕ.

Йалхуçалăх ертелĕн уставне пурнăçа кĕртсе пыман колхоз правленисем, партипе совет оргăнĕсем пысăк преступлени тăваççĕ.

Колхоз тупăшĕсене валеçес ĕç пуçланнипе пĕрлех, ревизи комиççисен пысăк та ответлă ĕç пуçланать. Ревизи комиççийĕ ертел хăйĕн членĕсемпе мĕнле расчот тунине тĕплĕн тĕрĕслет. Вăлах ĕçкунĕсене мĕн таран тĕрĕс çырнисене, ĕçкунĕсем тăрăх мĕн таран вăхăтра та та тĕрĕс парса татнине тĕплĕн палăртать.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, районсенчи партипе совет организацисен—пур колхозсенче те тупăшсене валеçесси çинчен колхозниксен аслă пухувĕсенче тĕплĕн сӳтсе-йавмала тăвас пулать.

Халăх тăшманĕсем колхоза сăтăр тăвас шутпа колхоз тупăшĕсене ĕçкунĕсем тăрăх мар, пурне те пĕр пек валеçтермеле тума пăхаççĕ.

Кун пек тăшмансен пĕр тĕллев—ĕçкунĕн хакне йунетсе колхозниксене хирĕçтерсе йарасси, çапла вара—колхоз стройне хавшатасси. Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсене тăр̆ă шыв çине кăларса пĕтермеле. Сыхăлăх вăйлă пулмала.

„Колхоз уставне питĕ çирĕп пăхăнса пыни, чăн-чăн большевикла сыхлăх тата тăшмансемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешни—пĕтĕм колхозсене пуйан пурнăç çулĕ çинче çĕнĕрен пысăк утăм тума пулăшĕç“.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ИЗОГИЗ Аслă пролетарилĕ революци 20 ç. тултарнă тĕле кăларакан плакат. Плакатăн текстне 18 чĕлхепе кăлараççĕ. Плакатне В. Сурйанинăв художник туса хатĕрленĕ.

В. Олейник фото-ӳкерчĕкĕ.

Чукун çул строительствинчи стахановла вунăкунлăх

Пĕрремĕш кун

Çуртйĕрсем тăвакан участкăра

Стахановла вунăкунлăхăн пирвайхи кунĕнче, 6-мĕш участкă малтанхи вăхăтринчен лайăхрах ĕçлеме тытăнни палăрчĕ. Ку кун участкăна çĕнĕрен 28 çын килнĕ хыççăн, рабочисен хисепĕ 82 çынна çитрĕ. Çак çынсемпе пĕр кун хушшинче 15 кубла метр фундамент хывнă, 12 кубла метр котлован алтнă, 50 стык шыв илмели лини хывнă т. ыт. те. Вăтамран илсен ĕç тухăçлăхне 118 процента çитиччен ӳстернĕ.

Ĕçре Çĕрпӳ районĕнчи „Коммунар“ колхозран килнĕ П. Васильйĕвă йулташ йертсе пыракан бригадă лайăх тĕслĕхсем пачĕ. Унăн бригади малтанхи кунсенче нормăна тултарса çеç пынă пулсан, октябĕрĕн 1-мĕшĕнче 125 процент тултарчĕ. Васильйĕв бригади те кайа йулмасть. Унăн бригади малтанхи вăхăтра нормăна 130 процент тултарнă пулсан, вунăкунлăхăн пĕрремĕш кунĕнче 132 процент тултарчĕ. Çавнашкалах Крайнĕв каменщик та хăйĕн нормине 110 процент тултарчĕ.

Анчах хăвăртлăхсем çителĕклĕ теме çук-ха. Стахановла вунăкунлăх планне тултарас тесен ĕç хăвăртлăхсене тата та ӳстерни кирлĕ.

Иккĕмĕш участкăра

Иккĕмĕш участкăра октябĕрĕн 1-мĕшĕнче çурранисем 783 çын, лашалисем 248 çын тата икĕ екскаватăр ĕçленипе 2415 кубла метр çĕр чавса кулаланă. Ку пачах та çителĕксĕр. Кунашкал ĕçлесси участкă руководителĕ Петров йулташ екскаватăрсене ăнăçлăн ĕçлеме условисем туса паманнинчен тата районсем ĕç вăйĕ организацилесси çине тивĕçлĕн çавăрăнса пăхманнинчен килнĕ. Йетĕрнепе Сĕнтĕрвăрри районĕсем строительствăра лайăх ĕçлессишĕн ăмăртăва тухнă. Вĕсем ăмăртăва йатшăн çеç тухни вунăкунлăхăн 1-мĕш кунĕнчех лайăх курăнчĕ. Ку кун Йетĕрне районĕнчен пĕтĕмпе çурранисем 101 çын, лашалисем 44 çын, Сĕнтĕрвăрри районĕнчен çуранисем 229 çын, лашалисем 13 çын çеç ĕçлерĕç. Йетĕрнепе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи организацисем лайăх ĕçлесси çинчен кăшкăрашсах вăхăта иртересшĕн пулас.

Пилĕкĕмĕш участкăра

Пилĕкмĕш участкă малтанхи вăхăтри пекех начар ĕçленĕ. Строительствăна ĕç вăйĕ организацилесе йарас пирки Шăхасан районĕнчи колхозсем нимĕн те туни курăнмасть.

Виççĕмĕш участкăра

Çурранисем 721 çын, лашалисем 1841 çын ĕçленипе 3582 кубла метр çĕр чавса купаланă. Кунсăр пуçне екскаватăр 500 кубла метр чавса купаланă. Ку кулленхи плана 15 процента йахăн çеç тултарни пулать.

Мĕншĕн чăтма çук начар ĕçленĕ? Айăплĕ участкă руководителĕсем ĕçлеме пĕлменнинче тата районсенчи организацисем сӳрĕк ĕçленинче. Прораб Дашков, ĕçлекен рабочисене те тĕрĕс вырнаçтарма пултарайман. Чи кирлĕ, халех тумали ĕçе—96-мĕш километрти труба çине тăпра тултарассине халĕ те пурнăçа кĕртмен пирки, рельсăсем хывассине чарса тăрать. Дашков участкăри стахановцăсем çинчен те тĕплĕн пĕлмест. Ку ĕнтĕ массăран уйăрăлса тăни çинчен калать.

Участкăна ĕç вăйĕ парас тĕлĕшпе Канашпа Вăрмар районĕсем начар ĕçлеççĕ. Ун çинчен çак фактсем те лайăх каласа параççĕ: октябĕрĕн 1-мĕшĕнче ирхине Канаш районĕнчен 67 лашапа ĕçленĕ пулсан, каçхине 20 лаша çеç йулнă. Вăрмар районĕнчен ирхине 46 лаша ĕçленĕ пулсан, каçхине 17 лаша çеç йулнă. Капла йаланах пырса кайала тавăрăнса тăни строительствă ĕçне чăрмав кӳнине районсенчи руководительсем те ăнланса илесшĕн мар. Вăрмар районĕнчен пынă уполномоченнăй Петровă йулташ хăй те тухса тарнă.

Рельсăсем хывнă çĕрти бригадăсен паха тĕслĕхĕсем

Октябĕрĕн 1-мĕшĕнчен рельсăсем 96-мĕш километра çитиччен хывнă. Рельсăсем хывнă çĕрте ĕçлекен бригадăсем татах та хывма хатĕр. Анчах 3-мĕш участкă (прораб Захарйонок) 96-мĕш километрти труба çине тăпра тултарманни чăрмантарать.

Стахановла вунăкунлăхăн пирвайхи кунĕнче Тарасăв комсомолец бригади нормăна 148 процент тултарнă. Çавнашкалах Туликăвпа Саликăв бригадисем 147 процентшар тата Пульахин бригади 122 процент тултарнă.

Стахановла вунăкунлăха хутшăнчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăлти Блюхĕр йачĕпе тăракан колхоз членĕсем чукун çул строительствинче ĕçлекен стахановцăсем октябĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа стахановла вунăкунлăх ирттерме чĕнсе каланине сӳтсе-йаврĕç. Чĕнӳве сӳтсе-йавма пухăннă пухăва пынă колхозниксем пурте пĕр кăмăлпа чукун çулне Октябĕр уйавĕ тĕлне туса пĕтерессишĕн кĕрешме пулчĕç. Хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртме тепĕр куннех чукун çул строительствинче ĕçлеме çураннисем 42 çын, лашалисем 15 çын тухрĕç.

Васильйĕв.

Комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ

Октябĕрĕн 2-мĕшĕ. Ирхи лару

Шăмăршăри комсомол райкомĕн секретарĕ Чудаков йулташ райсутпай пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Крылов троцкисăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен, ăна хӳтлекен Швецов çинчен калать (райком секретарĕ пулнăскер).

— Комсомол обкомĕнчен пирĕн районри конференцине „Çамрăк колхозник“ редакторĕ пулса ĕçленĕ Йашевски пычĕ, —тет Иефимăвă йулташ—Хĕрлĕ Чутай районĕнчен килнĕ делегаткă. Районри конференци делегачĕсем райком секретарĕ пулнă Жемчугов халăх тăшманĕсемпе çыхланса кайни çинчен фактсемпе çирĕплетсе каланă пулсан та, Йашевски 5—6 хутчен: Жемчугов лайăх работник, ăна пленум членне суйлас пулать тесе тухса каланă. Райком секретарĕ Толстов йулташ та унпа килĕшнĕ. Пире Жемчугова пленум членне суйлама ирĕксĕрлерĕç.

Алексейĕв йулташ Обкомпа Сымокин ĕçĕсем çинчен çапла каларĕ:

— Виçĕ çул çур̆ă хушшинче Обкомол аппаратĕнче 50—60 çынран кайа мар çын улшăннă. Вĕсенчен чылайĕшне Сымокин хăйĕнпе килĕшменшĕн ĕçрен кăларса йанă. Комсомол Обкомĕн çитменлĕхĕсене кăтартакан çынсене чăтма пултарайман.

Комсомол организацинче йала тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайассине Сымокин хăй пуçарса пынă. Сымокин ĕçлеме тытăннăранпа пĕр съезд та, пĕр пленум та ĕçкĕ-çикĕсĕр иртмен. Ĕçкĕ-çикĕн тĕп йăвине Атăл леш йенче пионер лагерĕ пулнă. Лагĕр пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Михайлăвăн кирекхăш вăхăтра та ерех-сăра çителĕклĕ пулнă. Кунта ĕçнĕ-çинĕ, хĕрарăмсемпе аташнă. Ку ирсĕр ĕçе комсомолкăсене те хутшăнтарнă. Çакăн хыççăн Сымокин йулташ ĕçкĕ-çийĕпе кĕрешме пултарнă-и? Йаллах пултарайман. Ку та сахал. Сымокин хăпана çӳреме йуратнă, хăй патне те чĕннĕ. Аршинăв аферис Сымокинпа туслă пулнă, унпа пĕрле ĕçсе çинĕ.

Сымокинăн ĕçне лайăх доклад, чаплă резолюци çырнă тăрăх хакланă. Вăл лайăх каласнă, кăтартнă çитменлĕхсене „йышăннă“. Анчах çитменлĕхсене пĕтерме шутламан. Вăт мĕншĕн комсомолецсене, ĕççамрăкĕсене воспитани парас ĕç начар пырать, тет Алексейĕв.

Павлăв йулташ (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) комсомол обкомĕн пайĕсем начар ĕçлени, комсомолăн пуçламăш организацисене начар йертсе пыни çинчен каларĕ.

— Тӳрханта райхаçат редакторĕ пулса ĕçленĕ Жданкин Краснов троцкиспа çыхăну тытнă. Иртнĕ çулта Краснов района пырсан, ăна питĕ чаплă кĕтсе илнĕ. Жданкин стена хаçат редакторĕсен курсĕнче: влаçа Троцки йертсе пынипе алла илнĕ, тесе ăнлантарнă, —тет Петров йулташ.

Андрейĕвă делегаткă Сымокин ачалă комсомолкăсемпе ĕçлессине хакламанни çинче, тата йалти учительсем массăлă ĕçрен таталса кайни çинче чарăнса тăчĕ.

Улатăрти комсомол райкомĕн секретарĕ Иерофейĕв йулташ комсомол Обкомĕн бюро членĕ пулса ĕçленĕ пулсан та, комсомол Обкомĕн тата хăйĕн йăнăшĕсене критиклемерĕ. Вăл пуш халапа çапнипех хăйĕн йăнăшĕсене сирсе йама пăхрĕ. Анчах унăн ирсĕр ĕçĕсене конференци тăр̆ă шыв çине кăларчĕ. Иерофейĕв ĕçкĕ-çикĕпе, тăшмансемпе кĕрешес вырăнне, хăй Сымокинпа пĕрле ĕçкĕсенче, банкетсенче пулнă, Сымокинăн ирсĕр ĕçĕсене хӳтеленĕ.

Конференци пĕр сасăпах Иерофейĕва президиумран кăларма йышăнчĕ.

Павлăв йулташ Сымокин Тăвай районĕнчи конференцире Теплов - тăшмана райком секретарне суйлама сĕнни çинчен калать. Вăл хăй шутланине пурнăçланă та. „Лайăх работник Теплов мĕнле ĕçлĕнĕ-ха?—Пĕр-пĕрне критиклеме йурамасть, пирĕн авторитет çухалать, тесе вĕрентнĕ халăх тăшманĕ Теплов райком работникĕсене.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленни

Збруйĕв комсомолецăн паха пуçарувĕ

КАЛИНИН, октябĕрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Осташков районĕнчи избач Йевгени Збруйĕв комсомолец колхозра суйлав саккунне вĕрентессине питĕ лайăх организациленĕ. Вунă колхозра вăл массовкă-шкулсем тунă. Вăл шкулсене учительсемпе комсомолецсем йертсе пыраççĕ. Кунсăр пуçне тата ваттисем, йалсоветри тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекен служăщисем валли шкулсем организациленĕ. Массовкă-шкулсен программипе ултă калаçу пулмала. Кашни калаçу ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенин пĕр сыпăкне çутатса парать. Массовкă-шкулсен руководительсем занятисенче калаçусене илемлетсе кăтартма схемăсемпе тата диаграммăсемпе усă кураççĕ.

Çитес кунсенче массовкă-шкулсенчен вĕрентсе кăлараççĕ тата вĕрнме çĕнĕрен илеççĕ.

Йевгени Збруйĕв йертсе пынипе вулав çуртĕнче стеклограф çинче çапса стена хаçачĕ кăлараççĕ. Ку стена хаçачĕ вунă колхоза та саланать. Стена хаçачĕ çинче „Суйлавçăсен трибуни“ йатлă пай тунă. Ку пайра ССР Союзĕн Аслă Советне суйлассипе çыхăнакан ыйтусене çутатса параççĕ.

Збруйĕв избачăн суйлав саккунне ăнлантарас ĕçри хаклă опытне Осташков районĕнче çеç мар, облăçăн ытти районĕсенчи избачсем те йышăнса усă кураççĕ.

Колхоз килйышĕсенчи политкун

Калинин облăçĕнчи партин Бологăв райкомĕ колхоз килйышĕсенче политкун оррганизациленĕ. 350 агитатăр колхозниксен килйышĕсенче çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен калаçусем туса иртернĕ. Политкуна 3.500 колхозникпе колхозницă хутшăннă. Октябĕрĕн малтанхи кунĕсенче çакăн пек политкунсене районри пур колхоз бригадисенче те ирттереççĕ.

Верхньайа Троицă йалĕнче

КАЛИНИН, Октябĕрĕн 1-мĕш (ТАСС). Пĕтĕм Союз старасти М. И. Калинин çуралнă йал çыннисем—Кашин районĕнчи Верхньайа Троицă йалĕнчи колхозниксем ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама аван хатĕрленеççĕ. Пухура вĕсем Аслă Совета суйламали Положенине сӳтсе-йавнă, ун хыççăн ăна кружокра статйасем тăрăх вĕренме тытăннă.

Библиотекăр Синицин йулташ ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе литературă выставки организациленĕ, колхозниксене çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен хаçатсемпе журналсем çинчи уйрăм статйасене вуласа парать.

Йалта тăват̆ă колхозник хутла пĕлмеççĕ. Вĕсем пурте суйлав пуçланнă тĕле суйлав бюллетенĕсене хăйсемех тултарас тесе хутла вĕренме шутланă. Хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăннă та ĕнтĕ, вĕсене йалти шкул учительсем вĕрентеççĕ.

Верхньайа Троица—суйлав участкин центрĕ. Суйлав кунĕнче, вырăнти колхозниксемсĕр пуçне, кунта çывăхри йалсенчи—„Посады“ колхозри тата „Тетково“ совхозри суйлавçăсем пухăнаççĕ. Ку йалсенчен Верхньайа Троицă йалне çитме инçех мар пулин те, суйлавçăсене аванрах пултăр тесе, совет Верхнайа Троицă йалне пурне те автомашинăпа илсе пыма йышăннă.

Йалсовет ача амăшĕсемшĕн те тăрăшать. Суйлав кунĕ вальли кашни йалтах уйрăм ача пӳлĕмсем уçма йышăннă. Ача амăшĕсем суйлава кайнă чухне хăйсен ачисене çав пӳлĕмсене хăварма пултараççĕ. Ачасене ку пӳлĕмсенче йатарласа уйăрнă çынсем пăхаççĕ.

Çурçĕр çутти

ЛЕНИНГРАД, октябĕрĕн 1-мĕш (ТАСС). Октябĕрĕн 1-мĕшĕнче çĕрле Ленинградра магнитла çилтăвăлпа пĕрле питĕ вăйлă çурçĕр çутти пулнă. Ку вăл радиостанцисене те ĕçлеме чăрмантарнă.

Октябĕрĕн 1-мĕшĕнче çĕрле Ленинградран çурçĕрелле пĕлĕт хăйĕн сăнне тата вырăнне улăштаракан тĕрлĕ сăнлă пăнчăсемпе тата çут̆ă пайăркасемпе çуталнă.

Çутçанталăкăн çак тĕлĕнмеле йавленине Пулкăв обсерваторинчи астрономсем сăнанă.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Республикă çарĕсем Арагони фронтĕнче наступлени тăваççĕ

Республикă çарĕсем хĕвелтухăçри (Арагони) фронтра йулашки кунсем хушшинче Хака хулин районĕнче вăйлăн наступлени тăваççĕ. Республиканцăсем Гальйего йуханшывĕн айлăмĕ урлă Франци чиккипатнеле кайакан çула темиçе çĕртен татса илнĕ, çавăн пекех Хака—Сарагосса чукун çул линине татса икĕ пуйăс тытса илнĕ. Республикă çарĕсем Сарагоссăран 18 километрта тăраççĕ.

Испани республикĕн çарĕ фронтăн сурçĕр участкинче çапăçнă чухне халăх çарĕнчи салтаксен сивĕ те çиллĕ çанталăкра чăнкă çăртсем урлă каçма тивнĕ. Пĕтĕм батальйон Гальйего йуханшывĕ урлă 25 минут хушшинче каçса пĕтнĕ. Çĕрле батальйон пăлхавçăсен позицийĕсем çине тапăннă. Çавăн пек кĕтмен çĕртен атакă тунипе республиканцăсем темиçе йал тытса илнĕ.

Фронтăн кăнтăр йенчи участкинче Сан Исидро текен сӳлĕ вырăн патĕнче фашиссем республиканцăсен позицийĕсем çине икĕ хутчен кĕрсе кайма хăтланнă. Анчах вĕсем пĕри те ăнăçлă пулман. Пăлхавçăсенне 400 çын вĕлерсе-амантса пĕтернĕ.

Ытти фронтсенчи лару-тăру нимĕн улшăнмасăрах тăрать.

Сентябĕрĕн 30-мĕшĕнче виçĕ фашисла самолет Каталони çыранĕнче республикă йалĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çĕрле фашисла самолетсем Барселонă патне çывхарма хăтланнă, анчах вĕсене республикăн зенитлă (сӳлеле перекен) артиллерийĕ хӳтерсе йанă.

Çурçĕрти фронтра республикă самолечĕсен ескадрилийи фашисла авиацине Хихон (Бискай заливĕн çыранĕнчи пысăк порт) патне çывхарма чăрмантарнă. Çавăн хыççăн вара фашисла самолетсем республиканцăсен тылĕнчи хуласемпе йалсем çине пушар тăвакан снарйадсем пăрахнă. Граждăнла халăх хушшинче вилекенсем нумай пулнă.

(ТАСС).

Шанхайри организацисем Чжу Дене ыр̆ă сунаççĕ

ШАНХАЙ, сентябĕрĕн 30-мĕш (ТАСС). „Дагунбао“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, профессилĕ союзсен Шанхай совечĕ, Китай халăхне çăлса хăварассишĕн кĕрешекен рабочи ассоциаци тата Шанхайри ытти общественлă организацисем те Китайăн 8-мĕш армин командуйущи—Чжу Де патне саламлă телеграммăсем йанă, ăна 8-мĕш армин Шаньсире çĕнтерӳ тунăшăн ыр̆ă сунаççĕ.

Йалхуçалăх ĕçĕсене пысăк пахалăхсемпе вĕçлетпĕр

Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхозпа „Алино" колхоз (Ишлей р.) Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç. Партипе правительствă кăтартса панă срукра тырпула уйран пуçтарса кĕрсе, патшалăха парса татма, чукун çул строительствинче кĕрхи вăхăтра Ишек 2000 кубла метр, „Алино" 1500 кубла метр тăпра кăларса купалама пулчĕç.

Çак обйазательствăсене пурнăçласшăн „Алино" колхозĕнче çапла ĕç тăрат.

Çентабĕрĕн 20-мĕшне пĕтĕм тырпула уйран пуçтарса кĕртсе çапса пĕтерпĕ. Кантăр çапса шыва хутнă. Патшалăха памали парăмсене тата натуроплатăна 100 проценчĕпех тултарнă. Вăтам шутпа пĕрчĕлĕ тырă кашни гектартан 110 пăт тухрĕ. Уйрăм участкăсенче ыраш гектартан 132 пăт, урпа гектартан 208 пăт тухрĕ. Килес çул акма çителĕклĕ вăрлăх уйăрса, уйрăм, таса тинĕ амбарсене хунă.

Сталин йулташăн 7—8 миллиард пăт тырă туса илмеле текен лозунгне пурнăçа кĕртессишĕн колхозниксем тăрăшса. ĕç дисциплинине пăсмасăр ĕçлеççĕ. Кăçалхи пек тырă лайăх пулни нихăçан та пулман. Ĕçкунĕ пуçне 8,9 килограм пĕрчĕлĕ тырă тивет. Колхозник Иванов П. (унăн çемйинче 3 çын) 400 пăт тырă илет. Белков М. 500 пăт илет. Авансла тырă илнĕ чухне Н. Павлов çапла калаçрĕ: — колхоза кĕнĕренпе те кун чухлĕ тырă илсе курманччĕ-ха. халĕ манăн татах 2—3 хут ытларах илмелли пулатске", — тет. Допризывник Иванов: „Хам çара кайатăп, килте, семйе валли 2 çул çимелĕх тырă ĕçлесе хăваратăп". тет. Колхозниксен кулйтурăллă пурнăçĕ вирлĕн ÿсет. Пÿрт йусаççĕ. çĕнĕрен чаплă пÿртсем лартаççĕ. Палти йалпосене костумсем, сукна, калушсем, атăпушмаксем илсе килме хушаççĕ. Палти çамрăксем гармоньсем, гитарăсем, балалайкăсем илме заказсем параççĕ. Колхозниксем партипе правительствă йышăннă решенисене чĕререн йуратса пурнăçлаççĕ.

Чукунçул тăвас ĕçре догăварпа 4500 кубла метр тăпра купаламала. 5130 кубла метр купаланă та ĕнтĕ.

Кашни бригадăрах ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренмелли кружоксем организациленĕ. Вĕсем 4-шар занйати туса иртернĕ. Çак кунсенчех пур суйлама пултаракан колхозниксене те вĕрентсе çитеретпĕр.

Аслă Октабĕр револйуцийĕ 20 çул тултарнă уйава татах та пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме мобилизацилленетпĕр.

Сÿс-кантăр заданине октабĕрĕн 10-мĕшне, аш-какай заданине октабĕрĕн 1-мĕшне парса тататпăр.

Колхоз председателĕ **В. Смелов.**
Парторг **Е. Серебрйаковă.**
Кулйтработник **Е. Халапсин.**

—О*О—

Шупашкарта çентабĕрĕн 16—25-мĕшĕсенче радиопартаудиторисен заведуйушчисен курсĕ пулса иртрĕ. Курсра радиотехминимум тата Аслă Совета суйламалли Положенине вĕренчĕç.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Йелчĕк, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Шупашкар, Патăрйел, Ишлей тата Куславкка районĕсенчен килнĕ курсантсем.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Примерлă колхоз

Атнар йалсоветне кĕрекен С. Петров йулташ йачĕпе тăракан колхозра (Хĕрлĕ Чутай р.) вăтам шутпа гектартан 18,7 центнер тĕш тырă туса илнĕ. Вăл шутран уйрăм кулйтурăсемпе: ыраш гектартан—20 центнер, кĕрхи тулă—18,1 центнер, çурхи тулă—18 центнер, сĕлĕ—20 центнер, вир—27,5 центнер йĕтĕн вăрри—5,5 центнер, йĕтĕн сÿсĕ—5,5 центнер, кантăр вăрри—10 центнер туса илнĕ.

Уйрăм сăнавлă участкăсенче ыраш гектартан—40,8 центнер, çурхи тулă—30 центнер туса илнĕ. Выльăх кăшманне кашни гектартан 500 центнер, çĕр улми—250 центнер пуçтарса илнĕ. Сăнавлă участкă çинче ĕçлекен бригадăна бригадир—стахановкă Данилăв В. П. йертсе пычĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес патшалăх панă планне 100 процентран ытла тултарнă. Иртнĕ çулта фермăран 9371 тенкĕ тупăш илнĕ пулсан, кăçал 61000 тенке çитмеле.

Колхозăн сысна ферминче çулталăкра 3 хут çăвăрласа паракан сыснасем пур. Уйрăмăнах пĕр сысна ами виççĕ çăвăрласа—пĕррремĕшĕнче—16 çура, иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕнче 14-шар çурă тунă. Пур çурăсене те тĕрĕс çитĕнтерсе, колхозниксене сутса 3.000 тенкĕ йахăн тупăш тунă. Сыснасем пăхакан стахановкă Николайĕвă Татйанă уйрăмăнах тăрăшса ĕçлет.

Ĕне ферминче ĕçлекенсем хĕллене аван хатĕрленсе çитнĕ. Пур витесене тасатса, йусаса сивĕ кĕмеле мар туса лартнă. Ĕнесене сăвакансем сĕт ытларах суса илессишĕн çине тăрсах кĕрешеççĕ. „Чернявка" йатлă 10 пăру амăшĕ пулнă ĕнерен 3700 литр сĕт суса илнĕ. „Пестравка" йатлă ĕнерен—3500 литр, „Ляумина" ĕнерен 3000 литр сĕт суса илнĕ. Çамрăк пăрусене таса, типĕ çĕрте усраççĕ. Апатсене вăхăтра нормăсемпе парса пынипе вĕсем кашни кун 1,232 килограм хушăнаççĕ.

Ферма районри йалхуçалăх выставкине уйрăм експонатсем уйăрса хатĕрленĕ. Уйрăмăнах паха експонатсене Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине илсе кайма палартнă.

Колхоз председателĕ—стахановца Беляков Иван пур ĕçре те кăтартулă ĕçлет. Ăна районри çĕрĕç пайне ĕçлеме илме палартнă.

Ленинградски.

Ĕçкунĕсене çухатаççĕ

Падикассиячи „Броневик" колхозра (Елĕк р.) колхоз членĕсем хăйсен ĕçкĕнекисене виçĕ уйăхра пĕрре çырнипе çырмасăр хăварса çухатаççĕ.

Колхоз членĕсем ĕç кĕнекисене ыйтсанах, колхоз председателĕ Петров Григорий: „Сирĕн кĕнекесене епĕр çийес çук", тесе ответлет. Колхоз членĕсем хăйсен ĕç кĕнекисене утă çулнă чух курнăранпа халĕ аван çапнă чух тин кураççĕ. Ĕç кĕнекисем çине ĕçкунĕсене тĕрĕс çырманшăн членсем питĕ пăшăрханаççĕ. Колхоз счетовочĕ Йегорăв Т. тата бригадир Филиппов пĕрне-пĕри шанса лараççĕ.

Колхозник—Алексейĕв.

Ĕçкунĕшĕн 30 кĕренке

„Хĕрлĕ Туçа" (Патăрйел р.) Орденоносца Л. Д. Острйаков йулташ йертсе пыракан колхозра кăçалхи тыррă мĕн пур кулйтурăсемпе ĕçкунĕ пуçне 30 кĕренке тивет. Хăшпĕр колхоз членĕсем хăйсен çемйисемпе 800-шер ĕçкунне çитернисем пур. Салмин Григори, Мулйуков Данил, Саликăв Алексей, Острйаков Йефрем 600 пăт ытла илеççĕ. Тата 150 ĕçкунĕ çинчен пĕрер пăт кишĕр уйăрчĕç

Орденоносцă Острайков йулташ: „Кăçалхи çулхи пек тырăсем лайăх пулнине астумастпăр. 1935 çулхинчен те ытларах вăйлă тырăпулă туса илтĕмĕр, тата патшалăх та лйготă пачĕ. Епĕр халь тĕлĕнмеле чаплă пурнăçра пурăнатпăр.

Чăнкипех те ĕлĕкхи вăхăтра камăн кĕлетне 600 пăт тырă кĕнĕ пулĕ, ĕлĕкхи вăхатра пуйансен анчах пулнă. Халĕ кашни колхозник кĕлетĕнчех темĕн чухлĕ тырă. Телейлĕ пурăнăçăн телейлĕ ывăлĕхĕрĕсем епĕр. Хамăр тăрăшнипе малашне те çакăн пек пурнăçпа тата пуйан та кулйтурăллă пурнакан пулăпăр", тет.

А. Замков.

—О*О—

Чашлама колхозĕ çинчен

Чашламари колхозра (Куславкка р.)нимĕнле ĕç те вăхăтра пулса пымаст. Тырпула питĕ тăккаласа пуçтарса кĕчĕç. 3-мĕш бригадă вырса пăрахнă ыраша пуçтармасăр темĕн чухлĕ выртарчĕ.

Лаша кĕтÿне кĕтекен çук, лашасем валйли апат хатĕрлекен çук. Хăш чухне лашасем выçах тăраççĕ. Уйар, аван çанталăкрах авăн çапма тухакан çук. Кĕлтесене те уйран туртарса пĕтермен. Кĕрхи çĕртме тăвакан çук. 6-мĕш номĕрлĕ трактăр бригади начар ĕçлет. Пĕр трактăрĕ августăн 6-мĕшĕнче килсе çентабĕрĕн 1-мĕшчен ним ĕçлемесĕрех тухса кайрĕ.

Колхоз организациленĕренпе 7—8 колхоз председателĕ, тата 7—8 кладовшчик улшăнчĕ. Çавăнпа колхозĕçĕ йухăнса пырат. Йалта сахалтан 20 учител, вĕсем колхоза пулăшмаççĕ, хăшне çулталăкĕпех курмастпăр, вĕсен общĕствăллă ĕç валйли вăхăт çук.

Вăй питти çын Лукйанăв Андрей—343,22 ĕçкунĕ тунă. 70 çул иртнĕ старик Москвин Семен 184,80, Москвина Марфă 198,93 ĕçкунĕ тунă. Вĕсен опычĕсене ытти колхозниксем хушшине сармаççĕ.

Колхоз ĕçне йусама, çитменлĕхсене пĕтерме выранти стена хаçат çине сахал çыраççĕ.

Уй хапхисем, картисем нихçан та тĕрĕс тăмаççĕ. Выльăхсем пĕрмайах тырпула ватаççĕ. Пĕччен хуçалăхсем патшалăха тырă парса татман. Чашламари çитменлĕхсенчен хăраса районри организацисем килсе те курмаççĕ.

Колхоз председателĕ Чумаков ĕçлеме пултарат, анчах ăна пулăшни кирлĕ.

Н. Соловйов.

Республикăри 2-мĕш радиофестивалй

Октабĕрĕн 1-мĕшĕнче республикăри 2-мĕш радиофестивалй пуçланчĕ. Парти Чăваш Обкомĕн бÿровĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх пулса иртекен çак 2-мĕш радиофестивалй халăх талантĕсен, предприйатисемпе колхозсенчи художĕствăллă кружоксен ÿсĕмĕсене пăхса тухмали чаплă уйав, кулйтурă фронтĕнче тунă çитĕнÿсен смотăрĕ пулса тăрат. Республикăри 1-мĕш радиофестивалй пулнăранпа çулталăк иртрĕ. Çак çулталăк хушшинче харпăрхăй пултарулăх коллективĕсем йыш тĕлĕшĕнчен нумай ÿснипе пĕрлех, пултарулăх тĕлĕшĕнчен те пысăк утăмсем турĕç. Вĕсен репертуарĕ пуйанланчĕ. Çакна радиофестивалĕн туллин кăтартса памала та ĕнтĕ.

Радиофестивалй чăвашсен профессионаллă искусствă хăйĕн пултарулăхне кăтартнипе пуçланчĕ. Профессионаллă искусствă концертĕнче Чăваш патшалăх хорĕ, уйрăм йурлакансенчен А. Г. Казакова, И. В. Васильĕв, сĕрме купăспа Замыков, фортопианăпа—Лйублин, виолончелпе Остен-Сакен пулчĕç. Хор чи малтанах „Сывăхран та сывăх аслă Сталин" йурра (музыкĕ Лисковăн) йурласа пачĕ.

Профессионаллă искусствă концертне итленĕ хыççăн чи малтан çакна асăрхатăн: вĕсен программинче „Сывăхран та сывăх аслă Сталин" йурăсăр пуçне пĕр çĕнĕ йурă та çук! Епĕр чăваш композиторĕсенчен Аслă Октабĕр револйуци пулнăранпа 20 çул тултарнă тĕле çĕнĕ те лайăх йурăсем кĕтнĕччĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕ те хăйĕн выступленине „Сывăхран та сывăх аслă Сталин" йурăпа пуçларĕ. Калас пулат, ку йурра Хуракасси колхоз хорĕ начар мар йурларĕ. Кăçал çеç организациленнĕ пулин те, хор (руководителĕ Т. Ç. Патрик) радиофестивале лайăх хатĕрленнĕ, йурăсене самайах ăста йурласа пачĕç. Сĕнтĕрвăрринчи судоверфри Тогайĕв йулташ йертсе пыракан хор пуринчен ытла оборона йуррисене ăнăçлă йурларĕ. Анчах хорти çынсем пĕр пек йурламаççĕ, хăшĕсем сĕтĕрĕнерех пыраççĕ, çав вăхăтрах теприсем ытлашши кăшкăрса йурлаççĕ. Ку хортан Петухов байанист Шубĕртăн „музыкалйнăй моментне" пысăк маçтăрлăхпа выляса пачĕ. Çав Петуховах „Çулйĕр йурри" çырнă, ăна Петухов байанпа хавхалантарса пынă май Васильĕвă Марфă йурларĕ. Музыкĕ аван, анчах текстпа музыкĕ килĕшсе тăмаççĕ. Мăн Маклашкинăри ача-пăча хорĕ (руководителĕ Леонтйĕв) фестивале хутшăнма лайăх репертуар суйласа илнĕ, йурласса та начар мар йурлаççĕ.

Канаш хули фестивалĕн малтанхи кунĕнче хулари художĕствăллă пултарулăха туллин кăтартса параймарĕ. Хула фестивалре чукун çул çинче ĕçлекенсен арăмĕсемпе кил хуçи хĕрарăмĕсен хорне кăтартрĕ. Ку аван. Анчах „Авăнмасăр, хуçăлмасăр" йурăсăр пуçне ытти йурăсене хор начар йурлат. Сăмахран, „Вăрман урлă каçрăмăр" тата „Йĕс таканлă утăр пур" йурăсене пăсса йурларĕç. Финанс техникумĕн хорĕпе оркестăрĕ те „Каховка" йурра пĕтĕмпех пăсса йурларĕç. Лайăх номĕрсенчен вакунсем йусакан савăтри хоран (руководителĕ Нечайĕв) чылай йуррисене, вăтам шкулта вĕренекен Халтурина Испани чĕлнинчен кусарнă „Мать" сăвва каланине палăртма пулат. Педучилишчă хорĕ пирки уйрăмăн каламала. Хора вăтă музыкант-преподавател П. Й. Йегорăв йертсе пырат. Хор вăйлă. Апла пулин те вăл фестивалйре хăйĕн вăйне кирлĕ пек кăтартма пултараймарĕ.

Радиофестивалĕн малтанхи кунĕ çинчен каланă май, кунта 1936 çулта пулса иртнĕ 1-мĕш радиофестивалĕн йăнăшĕсене аса илни ытлашши пулмĕ. Пĕлтĕрхи радиофестивалйре чылай пысăк шăйрăксем палăрнăччĕ. Нумай йалсовечĕсем фестивалй тулашĕнче йулнă, ăна хатĕрленмен. Чылай йалсоветсенче художĕствăллă пултарулăх смотăрĕсем пачах пулман. Уйрăм районсем (Кувакинă, Тăвай, Шăхасан т. ыт. те) фестивале хатĕрленме пит те кайа йулса тытăннă, çавăнпа районри художĕствăллă пултарулăха чăннипе кăтартайман. Кувакинă районĕ фестивале пачах та хутшăнман. Драмкружоксен, ача-пăча учрежденийĕсен пултарулăхне кăтартман пулнă т. ыт. те.

Кăçал çак çитменлĕхсене шута илес пулат, вĕсене тумала мар. Канашпа Сĕнтĕрвăрри выступленийĕсем тăрăх: районсем фестивале чăн та лайăх хатĕрленнĕ теме, вĕсем халăх пултарулăхне сарлакан кăтартаççĕ, тесе калама çук-ха.

К. Çергейĕв.

Октабĕрти Социалисăмла Аслă револйуци пулни XX çул тултарас умĕн.

О. УСТУЖАНИНА

Социалисăмлă Аслă револйуцийе хатĕрленни*)

Соглашательле партисене массă пĕрре те шанми пулнă. Менйшевиксемпе есерсен партийĕсем шалтан арканма тытăнаççĕ. Хăшпĕр тĕлте рабочисем çав партисем хыççăн пынă пулсан. халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех болйшевиксем йенне куçнă. Корнилăв пăлхавĕ чухне болйшевиксем массăсене Корнилăва хирĕç илсе кайма пултарнине çеç мар, çавăн пекех тата соглашательле партисен сутăнчăкла ăш-чикне те кăтартса пама пултарнине кăтартрĕç. Çентабĕрĕн 12-че (августăн 30-че) Тĕп Комитета йанă çырура Ленин „Рабочий" хаçатăн „питĕ лайăх" умстатйисене хакпа тăват. (Çав умстатйасене Сталин йулташ Вăхăтлăх правительствăн политикине хирĕçлесе çырнă). „Калас пулат, — тесе çырат Ленин Сталин йулташăн çав статйисем пирки, — пирĕн шухăшсем пĕтĕмпех пĕр пек килсе тухрĕç" (**Ленин.** Том XXI, стр. 120).

Ытти патшалăхсене пĕтĕм истори кăтартса панипе Российăра Корнилăв выступлени кăтартса пачĕ, — тенĕ Ленин. „Буржуази тăван çĕршыва сутат, халăха хăй аллинче тытса тăрас влаçпа хăйĕн тупăшĕсене сыхласа хăварас тесе хăт те мĕнле преступлени тума та пултарат". (**Ленин.** Том XXI, стр. 139).

Револйуци вăйĕсем ÿссе, активлăланса пынă. Советсем тылра та, фронтсенче те çĕнĕрен чĕрĕлсе тĕреклĕленнĕ. Пролетари ăта социалисăмла револйуцийĕн малашнехи кĕрешÿре йертсе пыма пултаракан йĕртен пĕр парти—болйшевиксен партин массăсен хушшинчи авторитечĕ ÿснĕ.

Корнилăв восстанине пусарсан тепĕр кунхех, çентабĕрĕн 17-че (августăн 31-че) Петроград совечĕ вăрçа халех чарса лартасси çинчен, предпринимательсен саботажне халех чарса лартасси çинчен, рабочисен контролĕ тăвасси çинчен, çĕре халех хресченсене парасси т. ыт. çинчен те болйшевикла резолйуци йышăнат.

Пур çĕрте те Хĕрлĕ гварди отрйачĕсем организациленеççĕ, вĕсем болйшевиксен партийĕ чĕннипе буржуазипе улпутсен правительствине хирĕç тухма хатĕр тăнă. Çентабĕрĕн 14-че (1-че) Кронштадтра Хĕрлĕ гварди организациленет. Çентабĕрĕн 17-че (4-че) „Гневный" йатлă миноносец команди пĕтĕм влаçа советсене пама ыйтат. Вйаткăра, Луганскра тата ытти хуласенче „револйуцийе сыхламалли пролетарилĕ комитетсем" организациленеççĕ, Минскри профсойузсем Хĕрлĕ гварди организациленси çинчен резолйуци йышăнаççĕ т. ыт. те. Çарта болйшевиксен влийанийĕ питĕ хăвăрттăн ÿссе пырат. Вырăнсенчи çар организацисем: ротă, батарейă, баталйон комитечĕсем—болйшевиксен аллине куçаççĕ. Çентабĕрĕн 21-че (8-че) Питĕр совечĕ болйшевиксен аллине куçат. Ун хыççăн Мускав совечĕ т. ыт. хуласенчи советсем болйшевиксен аллине куçаççĕ. Çентабĕрĕн 8-че (5-че) Мускав совечĕ: влаçа револйуцилĕ пролетариатпа хресченсен хăйсен аллине илмелле, тесе чĕнÿ калат. Çав кунах Краснойарскра Вăтам Çĕпĕрти советсен сйесчĕ усăлат, вăл болйшевикла полйитикăпе пулса иртет. Советсен влаçа хăйсен аллине илме тепĕр çĕнĕ май пулса тăрат. Анчах-та çав влаçа мирлĕ йĕркепе мар, буржуаллă правительствăна хирĕç, вакбуржуаллă блока хирĕç восстани тунипе кăна илме май пулнă.

„Пĕтĕм влаç советсене" тенĕ болйшевикла лозунг халĕ ĕнтĕ урăхла йанăра пуçланă. „Халĕ ку лозунг империализмран пĕтĕмпех уйрăлса кайса влаç болйшевиксен аллине куçнине пĕлтернĕ, мĕншĕн тесен, Советсем ĕнтĕ, хăйсен ытларахăшĕпе, болйшевикла пулнă. Халĕ ку лозунг револйуци, восстани урлă, пролетари диктатури патне тÿррĕмех пынине пĕлтернĕ. Унтан та ытларах, халĕ ку лозунг пролетари диктатурине организацилепине тата ăна патшалăхла формăланине пĕлтернĕ". (**Сталин,** „На путях к Октябрю". Предисловие, стр. XXXVII. 1925 ç.).

Çав вăхăтра Корнилăв подручнăйĕн Керенскин — капиталиссен Петроградри советра ларакан лакейĕсемпе: Церетели, Чхеидзе, Гоц тата ыттисемпе пĕрле кадетсем Корнилăвпа пĕрле каварлашу тунă, çавăнпа та çĕнĕ правительствăна кадетсемсĕр тумала тесе васкасах пĕлтермеле пулнă. Керенски „директори" тăват, паллах, „револйуцийе çăлмашкăн", тăватăн, тет. Сталин йулташ „Рабочий путь" хаçатра çентабĕрĕн 16-че (3-че) пичетленнĕ „Кризис и директория" йатлă статйипе Керенски маневăрне тăрă шыв çине кăларат: „Керенски, Терешченко, Верховски, Вердеревски тата Никитин, 5 çынтан „директори" — çакăн пек ĕнтĕ Керенски „суйланă", Керенски çирĕплетнĕ, Керенски умĕнче ответлă, рабочисене, хресченсене, салтаксене **пăхăнса тăман „çĕнĕ" влаç",** — тесе çырнă Сталин йулташ. (**Сталин,** „На путях к Октябрю", стр. 154).

Сталин йулташ „директори", — упте кадетсен партийĕн официаллă представителĕсем çук пулсан та, — вăл пĕтĕмпех кадетсене пăхăнса тăрат, вăл „кадетсемпе тунă сойуза" витсе тăракан ширмă пулса тăрат, улпутсемпе, капиталиссен диктатури пирки халăх тарăхнине хупăрласа тăрат, тесе кăтартса парат.

Револйуцилĕ массăсене улталанăшăн чăн малтан ес-ерсемпе менйшевиксем айăпла пулнине тата тепĕр хут кăтартса, Сталин йулташ вĕсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешме чĕнет. Çав вăхăтрах контрреволйуцин шанчăклă тарçисем Чхеидзепе Церетели комедийе тата малала тăсаççĕ. Çентабĕрĕн 27-че (14-че) рабочисемпе чи чухăн хресченсен интересĕсене тата тепĕр хут сутас тата демократи çинчен суйа сăмахсемпе витĕнсе правительствăна кадетсене лартас тесе „Демократилĕ канашлу" текеннине пухаççĕ.

Çапах та, çав „Демократилĕ канашлу" составне йури суйласа пухнă хула самоуправленисен, земствăсен, кооперации т. ыт. представителĕсем ытларах пулнă пулсан та, вăл кадетсемпе коалици тăвасси çинчен решени йышăнма хăйайман. Канашлу пухакан „Либердансем" çĕнĕ оргăна пур ушкăнсемпе партисен представителĕсене те кĕртмеле текен револйуцине президиумра кăна сĕтĕрсе кĕртмеле пулнă. Çапла ĕнтĕ, лакейсем буржуази ирĕкне тунă, çав вăхăтрах Керенски правительствăна хăйĕн чăн-чăн хуçисене—кадетсене кĕртсе лартма васканă. „Ултă министăр-капиталиссем, „кабинет" чăмăрĕ, вĕсен çумне, вĕсен ирĕкне туса пыракан тарçă вырăнне вунă министăр—„социалиссем", — çапла хакланă Сталин йулташ çав правительствăна (**Сталин,** „На путях к Октябрю", стр. 176).

„Демократилĕ канашлу" тĕкен сÿпĕлтетÿ çаплах тăсăлнă. Предательсем пушă сăмах çантармали çĕнĕ оргăн — „предпарламент" текеннине тунă. Рабочисем ăна „мунча умĕ" тесе йат панă. Штрейкбрехĕрсем—Каменĕвпа Рыкăв болйшевиксене çав „мунча умне" кĕме сĕннĕ, Ленинпа Сталин çав сĕнĕве татăклăнах сирсе ыватнă. Каменĕв „кăмăлсăр" пулса хăйне правительствă учрежденисенче хут те хăшинче те ĕçлесрен хăтарма ыйтатăп тесе каланă. Çакă вăл тытса çĕмĕрсе тăкнă, халĕ тăшмансен ĕçхалăх массине улталас шутпа тунă маневĕрĕ пулнă. Çак маневăра та çĕмĕрсе тăкнă.

Ленинпа Сталин хĕçпăшаллă восстани хатĕрлеççĕ

Ленинпа Сталин хĕçпăшаллă восстани хатĕрлес тĕлĕшпе практикăллă ĕçе куçаççĕ. Çентабĕрĕн 25—27 (12—14)-мĕшĕнче Ленин Тĕп комитета тата партин Петроградпа Мускав комитечĕсене çыру çырат: „Болйшевиксен влаçа илмеле". „Икĕ столицăри Рабочисемпе Салтаксен Депутачĕсен Совечĕсенче ытларах вырăн илсе болйшевиксем влаçа хăйсен аллине илме пултараççĕ те, илмеле те". (**Ленин.** Том XXI, стр. 193). Ленин каланă, болйшевиксем влаçа илес вăхăт шăпах халĕ çитрĕ, малала пысăк йăвăрлăхсем пулĕç, тенĕ. Вăл Петроградра тата Мускавра хĕçпăшаллă восстанийе çак кунсенчех тумала, влаçа туртса илсе правительствăна сирпĕтсе антармала, тет. Ленин çапла калат: „болйшевиксем йенче формалйнă ытларахăшĕ пуласса кĕтни—айван йапала: пĕр револйуци те çавна кĕтмест.. Епĕр влаçа халĕ илменсен истори пире каçармĕ.. епĕр, сăмах та çук, иккĕлеммели те çук, çĕнтерĕпĕр", тенĕ. (**Ленин.** Том XXI, стр. 194).

Çав кунсенчех, çентабĕрĕн 26—27 (13—14)-мĕшĕнче, Ленин Тĕп Комитета „Марксисăм тата восстани" йатлă çыру çырат. Çав çырура, хальхи условисенче марксисăм вĕрентнипе — „восстани çине искусствă çине пăхнă пек пăхмала" тенине пурнăçа мĕнле кĕртессине тĕплĕн палăртат.

Ленин калат, восстани, каварлашу çине мар, парти çине мар, вăл малта пыракан клас çине тайанса тăмала, тет. Ку пĕррремĕшĕнчен. Восстани халăхăн револйуцилĕ çĕкленĕвĕ çине тайанса тăмала. Ку иккĕмĕшĕнчен. Восстани вăл, ÿссе пыракан револйуцин историйĕнче халăхăн малта пыракан речĕсен активлăхĕ чи пысăк чухнехи, тăшмансен ретĕнче тата револйуци **имшĕр, иккĕленекен, хăйусăр тусĕсен хушшинче сулкалану** ытларах пулнă чухнехи **улшăнулă пункчĕ çине тайанмала.** Ку виççĕмĕшĕнчен". (**Ленин.** Том XXI, стр. 195).

„Восстани çине марксисла, урăхла каласан, искусствă çине пăхнă пек пăхас тесен, пирĕн çак вăхăтрах, пĕр минута та çухатмасăр, повстанцăсен штабне организацилемеле, вăйсене пайласа хумала, шанчăклă полксене чи кирлĕ пунктсене йамала, Александринкăна хупăрласа илмеле, Петропавловкăна туртса илмеле, генералйнăй штаба тата правительствăна арĕслемеле, йункĕрсемпе тискер дивизийе хирĕç çапăçса вилме пултаракан, анчах та тăшмана хула варрисене ыма ирĕк паман отрйадсем йамала; пирĕн хĕçпăшалланнă рабочисене мобилизацилемеле, вĕсене йулашки те хăйар çапăçăва чĕнмеле, харăсах телеграфпа телефона йышăнмала, пирĕн восстани штабне тĕп телефон станци çывăхне вырнаçтармала, телефон тăрăх унпа мĕн пур саватсене, мĕн пур полксене, хĕçпăшаллă кĕрешĕвĕн мĕн пур пункчĕсене çыхăнтармала т. ыт. те". (**Ленин.** Т. XXI, стр. 199).

Ленинăн „Болйшевиксем влаçа илмеле" „Марксисăм тата восстани" йатлă çырăвĕсене çентабĕрĕн 28(15)-мĕшĕнче парти Тĕпкомĕн ларăвĕнче сÿтсе-йавнă. Тĕпком ларăвĕнче Сталин йулташ çав çырусене чи кирлĕрех организацисене парса вĕсене унта сÿтсе йавма хушнă.

Сутăнчăк Каменĕв, Тĕпкомăн çав ларăвĕнче, Ленин çырăвĕсене хирĕç тухнă, вăл „çав çырусене" салатма ирĕк памала мар, вĕсене пĕтермеле, Ленинăн „практикăллă сĕнĕвĕсене" сирсе йамала тенĕ. Сутăнчăк Зиновйĕв та ун майлах каласнă. Хăйсен сĕнĕвĕсемпе вĕсем парти ретĕнче иккĕленÿ сарасшăн пулнă. Сталин йулташ çине тăрсах хушнипе, Тĕпком çав сутăнчăк отемсен сĕнÿне сирсе йанă та Ленин çырăвĕсене партин чи пăлăрах организацийĕсене йарса панă. Ленин лозунгĕсем массă хушшине сарăлнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах, çар организацисенче тата Петроград Комитетĕнче ĕçлекен Тĕпком членĕсен казармăсенче тата саватсенче вăхăтсăр нимĕнле выступленисем те ан пулччĕр тесе сăнаса тăмала пулнă.

(Йулашки пулат).

*) Малали. Пуçламĕшĕ „Чăваш Коммунĕн" 6-мĕш номĕрĕнче.

Йелчĕк райĕçтăвкомне тăшмансем кĕрсе ларнă

Йелчĕк райĕçтăвкомне хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем çатăрла ĕçсем туса пыни çинчен сахал мар систерӳсем пулнă. Анчах та вĕсене пайанччĕнех тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкман.

Райçĕрĕç пайне 1918—19 çулсенче çĕпĕрте Колчак çарĕн штабĕнче çыхăну пайĕн начаљникĕ пулнă. М. Гаврилăв йертсе пырат". М. Гаврилăв Çĕрĕç пайне ăнсартран пырса лекнĕ çынсене йартсэ, вĕсемпе пĕрле сăтăрçăла, тăшманла ĕçсем тунă.

Гаврилăвăн заместитĕлĕ пулса чылай вăхăтчен, совет влаçне хирĕç тăракан, пупсемпе пĕрле халăхсене улталакан Можалĕв ĕçленĕ.

Районри çĕрĕç пайĕн аслă зоотехникĕ пулса тăшман Артӳшкин ĕçленĕ. Вăл контрреволюцилĕ агитацисем сарса çӳренĕ, çамрăк зоотехниксене ĕçкĕпе пăсса пурăннă. Аратлă выљăхсене ăратсăр выљăхсемпе хутшăнтарса йарса, вĕсен ăратлăхне пĕтерес задачăна лартнă.

Гаврилăв колхозсенчен килекен жалăпасем çине çиелтен пăхнă. „Чапайĕв", „Кивĕ Ейпеç", „Вперед", „Хĕрлĕ Тимеш" колхозĕсенче чылай вăхăт хушши халăх тăшманĕсем ĕçлесе пынă. Кун çинчен çĕрĕç пайне, унăн пуçлăхне Гаврилăва, сахал мар пĕлтернĕ. Вăл çак пĕтĕм ĕçсене путарса пынă.

Райçĕрĕç пайĕ, унăн пуçлăхĕ Гаврилăв, çамрăк кадрсене, парти ĕçĕсене пĕтĕм вăйпе хурса ĕçлекен çамрăксене колхозри йертсе пырас ĕçе лартассине чăрмантарса пынă. М. Гаврилăв Осоавиахимăн районри совечĕн председатĕлĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра, Осоавиахим ĕçне чарса лартас шухăшпа, райсоветăн ĕçне халăх тăшманне С. Макарăва шанса панă. Осоавиахим пуçламĕш организацийĕсенче ĕçлеме çамрăксене суйлама йурамаст тесе, тăшманла установкăсем панă.

Районри сутĕç пайĕнче чылай вăхăт хушши ес-ер—националис Ф. Игнатийĕв ĕçленĕ. Райĕçтăвком ăна Патрекелĕнчи туллимар вăтам шкула историпе вĕрентме учитĕле йанă. Çак шкултăх директăр пулса кулак пулнă Пушков ĕçлет.

Игнатийĕвпа Пушков сутĕç пайĕсен пуçлăхсем пулнă вăхăтра шкулсене сахал мар халăх тăшманĕсене йарса, унта сăтăрлă, тăшманлă ĕçсем тума пулăшса пынă.

Шăмалакри туллимар вăтам шкула халăх тăшманне, фашиссен агентне Барашкина йанă. Барашкин çамрăк учитĕлсене йăла тĕлĕшĕнчен пăсса йарса, ĕçкĕ урлă хăй аллипе çавăрса илнĕ, çапла вара вĕсене те халăх тăшманĕсен ĕçне тутарнă.

Çамрăк учитĕлсем ушкăнăн-ушкăнăн ĕçме тытăннă, пĕр пĕрин хушшинче хирĕçӳсем кăларса йанă, уроксене ӳсĕрĕлсе пынă, ачасене хĕнесе вĕрентнĕ, пионерсемпе ĕçлессипе йапăхлатса йанă.

Лаш-Тайаба, Аслă Йелчĕк, Кушкă, т. ыт. хăшпĕр шкулсем те тăшманла елементсемпе вараланса пĕтнĕ.

Хутла сахал пĕлекенсемпе пĕлменнисене вĕрентес ĕç районра вуçех сӳнсе ларнă. 1937—38 вĕренӳ çулне çителĕклĕ таран хатĕрленсе илмен.

Йелчĕк райĕçтăвком президиумĕн Гаврилăвпа Игнатийĕвăн сăтăрла, тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса, вĕсепе çапса салатса ытти тăшмансене те тĕппипех кăкласа тăкмала.

А. Воробйов, П. Маков, Кнјаçĕв К. Воробйов.

Канаш—Шупашкар чукун çулĕн релсисене хунă çĕрте

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Тăшмансене тăрă шыв çине кăлармала

Илйинкă йалсоветĕнчи „Осоавиахим" (Тутаркас р.) колхоз председатĕлĕ пулнă Захарăв Н., колхоз счетовочĕ Ф. Данилăв сăтăрла ĕçсем туса пурнаççĕ. Вĕсем колхозниксене формалинпа чухенĕ тырăна авăртса валеçсе панипе 18 колхозник йавăр чирленĕ. Уборкă вăхăтĕнче пăруламали ĕнене пустарнă.

Захарăвпа Данилăв колхозра пуç пулса тăрса, пĕрмайах колхозăн сталинла уставне пăсса пынă. Колхоз çамрăкĕсене районри колхоз шкулне йаман, вĕренме кайма ыйтакансене тĕрлĕ сăмахсем каласа мăшкăланă.

Н. Захарăв колхоз председатĕлĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра 2-мĕш бригадăна „фашисла бригадă" тесе йат панă. Колхоз счетовочĕ Данилăв йулашки кунсенче В Волкăв колхозника хĕненĕ. Колхозра миçе ĕçкунĕ ĕçлесе илнине пĕлекен пĕр колхозник та çук, мĕншĕн тесен ĕçкунĕсене çырса пымаççĕ. Захарăв тăшманла ĕçсене тăрă шыв çине кăларасран хăранипе, хăйĕн çывăх çыннисене пухса, хупă лару туса ирттернĕ. Захарăва халĕ Хĕрлĕ çара илнĕ. Кун пек путсĕр çыншăн чаплă Хĕрлĕ çар ретĕнче вырăн пулма пултараймас.

М. Исайĕв.

Суйлавçăсен спискисем хатĕр

ТРАК. Кушар йалсовечĕ „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренессине план тăрăх йĕркелесе пырат. План тăрăх занјатисем ăнăçлă, организацилĕ пулса иртеççĕ.

Кашни бригадăрах кружоксем пур. Кашни кружок çумне учитĕлсене, йалсовет членĕсене çирĕплетнĕ.

Çак кунсенче суйлавçăсен спискисене туса çитерчĕç. Йалсоветĕнче ку спискăна кĕмесĕр йулнă çын çук. Суйлавçăсем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас йĕркесене пĕлсе тăраççĕ.

Н. Тимофейĕв.

Хĕрлĕ çара илнĕ çамрăксем суйлав саккунне вĕренеççĕ

ÇĔРПӲ. Кашаркасси йалсовечĕ çумĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме кружок уçнă. Кружока йалсовет председатĕлĕ Г. Иванов йертсе пырат. Вĕренме 26 çын çӳрет. Ку шутран çурри ытларах Хĕрлĕ çара илнĕ çамрăксем. Вĕсем уйрăмăнах хастарлăн вĕренсе пыни палăрат. Вĕренме кашнийех хатĕрленсе пыраççĕ. Ыйтусем параççĕ.

С. Шибарцов.

Йетĕрне районĕнче 49 суйлав участки пулат

Йетĕрне районĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес ĕç сарăлсах пырат. Çак кунсенче районра миçе суйлав участки пулмалине палăртнă. Йетĕрне районĕнче пурĕ 49 суйлав участки пулат, ку шутран 5 участкă хулара пулат. Суйлавсем ирттермели пӳлĕмсене, участкăри суйлав комиссийĕсен председатĕлĕсене палăртнă. Суйлав саккунне вĕренмели кружоксем 107 ĕçлеççĕ. (Хамăр инфор.)

„Шмидт" колхоз членĕсене

(Красноармейцă çырăвĕ)

„Епĕ çамрăк-ха, Ваљă есĕ, акă Хĕрлĕ çарта ĕнтĕ, епĕ йалти шкула çеç чупатăп. Çавах та епĕ Сталинла Конституцине, суйлав саккунне вĕренетĕп. Сталинла Конституцине вуласан, чĕре хĕпĕртет. Ахаљ мар мĕн вилнĕ Перекопра, Хĕвелтухăçĕнче пирĕн аттесем, пиччесем. Ĕçхалăхĕ телейлĕ, савăнăçлă пурнăçшăн кĕрешнĕ. Вăл телейлĕ пурнăçа Сталинла Конституци çирĕплетсе хучĕ.

Епĕ йут патшалăхсенчи конституцисем çинчен те нумай вуларăм. Анчах мана вĕсен Конституцийĕ питĕ тĕлĕнтерет. Акă Францинех илер-ха. Унта демократилĕ патшалăх, теççĕ. Çав вăхăтрах хĕрарăмсене суйлав прави памаççĕ. Салтаксене те суйлав прави памаççĕ. Германинче хĕрарăмсене, вак халăхсене нимĕнле права та памаççĕ. Унта ĕçхалăхĕ йуратакан çулпуçа—Телмана асаплантараççĕ, салтаксене Испанири халăха пĕтерме ирĕксĕр йараççĕ. Çурçĕр Америкări Штатсенче негăрсем суйлама пултараймаççĕ.

Ăçта ĕнтĕ унта демократи? Ултав çеç вĕт кунта?"

Çапла çырат ман йата йалти пионер. Тĕрĕс калат вăл, тĕрĕс ăнлайат. Унта, урăх патшалăхсенче, демократин йачĕ çеç, халăха улталамали хут çеç.

Пирĕн 18 çула çитнĕ граждансем пурте суйлама та, суйланма та пултараççĕ. Сутпа сасăсăр хăварнисем тата тăнран тухнисем çеç суйлама пултараймаççĕ.

Совета пурте пĕр пекех — хĕрарăмсем те, пур вак халăх та, пурлăхне, пĕр вырăнта мĕн чухлĕ пурăннине пăхмасăрах суйлама та, суйланма та пултараççĕ. Паллах, йалта масса хушшинче халĕ питĕ ĕçлес пулат. Пупсем халĕ хăйсем майлă халăха çавăрма тăраççĕ, вĕсем те хытă суйлава хатĕрленеççĕ.

Пирĕн суйлавсем тан пулаççĕ. Кашни гражданинăн пĕр сасă çеç пулат. 1924 çулхи Конституци тăрăх рабочисем 25000 çынтан, хресченсем 125000 çынтан пĕр депутат йараччĕç. Çав вăхăтра урăхла тума май килмен. Ун чухне капиталиссен йулашкийĕсем вăйлă пулнă, кулак вăйлă пулнă. Пирĕн рабочи клас çеç влаçа тĕрĕс тытса пыма пултарнă. Хресченсем ун чухне сур урипе капиталиссен йенче, сур урипе социализм йенче тăнă. Халĕ кашни республикă, облаç йе, край халăхĕ 300.000 çынтан пĕр депутат суйласа йараççĕ. Йут патшалăхсенче суйлавсем тан мар. Акă Парижри 6 округри 1-мĕш буржуази округĕ 8000 суйлакансенчен 1 депутат йарат. Çав вăхăтрах 2-мĕш пролетари участки 50000 суйлакантан 1 депутат йарат.

Йут патшалăхсенче суйлав округĕсене пролетарилĕ вырăнсенче сахалтарах тăваççĕ, çав майпа вĕсене патшалăх управленин пăтне çывăхне те йамаççĕ.

Ку таранччен суйлавсем нумай сыпăклă пулнă. Астăватăр пулĕ: районри сĕес пухăнат, вăл республикăри сĕеса делегатсем йарат. Республикăри сĕес крайри сĕеса, крайри сĕес РСФСР сĕесне, вăл сĕес Пĕтĕм Сойузри сĕеса йарат. Сыпăксем нумай пулнă. Каллех ун чухне урăх майлă тума май килмен.

Халĕ ĕнтĕ йалтах, хуларах Аслă Совет депутачĕшĕн кашни суйлаканах сасă йарат. Ăна халăх тӳрех суйлат.

Сасăлас йĕрке вăрттăн пулат. Кашни суйлакан хăй сассине бӳллетен урлă парат. Вăл камшăн сасă панине никам та пĕлмест. Çак майпа ĕçсынни совета чи лайăх çынна, ĕçхалăхĕшĕн тăрăшакан çынна парат. Пирĕн советсене лайăх çынсем суйланĕç, советсем тата лайăхрах ĕçлеме пуçлаççĕ. Аслă Совет депутачĕ суйлакансем умĕнче ответлă пулат, унăн хăйĕн ĕçĕсем çинчен суйлакансене пĕлтересех тăмала. Начар ĕçлекен депутата кайала чĕнсе илме те пултараççĕ.

Аслă Совета депутатсем суйлама суйлав округĕсем пулаççĕ. Вăл округсене пирĕн республикăра уйăрнă та ĕнтĕ. Кашни округ пĕр депутат суйлат.

Сойуз Советне депутат суйлама 300.000 çынтан округ тăваççĕ. Националљнăççен Советне суйлама Сойузлă республикăра 25 округ, автономлă республикăра 11 округ, автономлă облаçре 5 округ, националљнăй округра 1 округ пулат.

Пирĕн республикăра 1.000.000 патнеле халăх пурăнат. Çапла вара пирĕн виçĕ тулли округ, тата ытти облаçсемпе, йе крайсемпе, йе республикăсемпе пĕрлешсе тепĕр округ пулмала. Кунсăр пуçне Националљнăççен Советне суйлама 11 округ тăватпăр. Пирĕн республикă РСФСР кĕрет. РСФСР Националљнăççен Советне суйлама 25 округ тăват. Пĕр округне пирĕн республикă та кĕрет. Çапла вара ĕсĕр Совета виçĕ хутчен хăвăр бӳллетенĕрĕсене паратăр.

Кашни республикă пĕр пек правапа усă курат, кашнийех пĕр пек правапа депутатсем суйлаççĕ.

Аслă Совета депутатсем суйланă чухне панă бӳллетенсене пухса шута илме участкăсем тăваççĕ. Йалсоветĕнче 2 пин çын пурăнаççĕ пулсан пĕр участкă тăваççĕ, анчах уйрăм йалсенчи, аулсенче, кишлаксенче 500 çынтан пуçласа 2000 çынна çитиччен пурăнаççĕ пулсан, уйрăм участкă тума йурат. Хуласенче, посолкăсенче, йалсовечĕсенче 2 пин çын ытла пурăнаççĕ пулсан, 1500—2500 çынтан та участкă тума пулат.

Çакăн пек участкăсем туни, кашни суйлаканах пĕр кун хушшинче сасă кайса пама май парат.

Кунсăр пуçне çурçĕр районĕсенче тата хĕвеланăç районĕсенче 100 çынтан та суйлав участки те тума пулат.

Çар пайĕсенче 50 çынтан пуçласа 1500 çынна çитиччен пурăнаççĕ пулсан, уйрăм участкă тăваççĕ.

Бољницăсенче, канмали çуртсенче, санаторисенче, пăрахутсем çинче 50 çынран та суйлав участки тума йурат.

Çакă ĕнтĕ пирĕн Конституци кашни суйлаканшăн тăрăшнине, суйлакана хăй правипе сарлакан усă курма май панине пĕлтерет.

Нихăш патшалăхра та пирĕн пек влаç çук, пирĕн совет влаçĕ пек ĕçхалăхĕшĕн тăрăшакан влаç çук.

Çитес, йулашки çырура суйлав комиççисем çинчен тата суйлас йĕрке çинчен каласăпăр.

Ив. Куçмин.

Халăх тăшманесене пулăшакансем

Халиччен „Çамрăк колхозник" хаçатăн редактăрĕ пулнă П. Иашевскипе, ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн секретарĕ пулнă И. Терентйĕва, Обкомăн вĕренекен çамрăксемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ пулнă Ф. Прокопйĕва, Обком бӳровĕн членĕ пулнă Н. Чекмарйова комсомолăн облаçри XIV-мĕш конференцийĕ мандат памала мар туса, конференцинчен кăларса йачĕ.

Çак, облаçри комсомол организацине йертсе пырас ĕçре пулнă çынсем пирки мĕнле сăлтавсене кура çакнашкăл çирĕп организацилĕ мерăсем йышăнмала пулнă-ха? Акă мĕншĕн.

П. Иашевски — пирĕн республикăна халăх тăшманĕ Файнберг панă путовкă тăрăх, вăл пулăшнипе килнĕ. Комсомол Чăваш обкомĕ ăна, политика тĕлĕшĕнчен тата ĕçре пач тĕрĕслемесĕрех, вăл мĕнле çын иккенне пĕлсе çитмесĕрех, килнĕ килмен „Çамрăк колхозник" хаçат редактăрне лартнă. П. Иашевскин „Çамрăк колхозник" хаçатри пĕтĕм ĕçĕсене илсе пăхсан, ун çинчен кĕскен çакна çеç каламала: **редакцине кĕнĕ хыççăн Иашевски малтан пуçласа вĕçне çитиччĕнех сăтăр туса пурăннă.**

„Çамрăк колхозник" хаçат редакцийĕнче такçантанпа ĕçленĕ, çав ĕçре пиçнĕ, тĕрĕсленнĕ комсомолĕсене тем тĕрлĕ майсемпе хĕсĕрлесе, редакцинчен йăлтах кăларса сирпĕтнĕ, редакци аппаратне пушатса хăварнă. Корреспондентсемпе ĕçлессине йапăхтарса йанă, çавна пула унчен хастарлă корреспондент пулнă йултăшсемех „Çамрăк колхозника" çырма пăрахнă, корреспондентсен йышĕ сахалланса йулнă, йулашки вăхăтра редакцине кунне 1—2 çыру çеç килсе тăма пуçланă. Ку вăл „Çамрăк колхозник" историйĕнче нихăçан пулман йапала! Редакцинчи тата редакци тавра пĕтĕçсе тăнă актива салатса йани—Иашевскин пĕр калама çук пысăк сăтăрлă ĕçĕ. Унсăр пуçне, вăл хаçатăн болљшевикла идейлăхне чакарнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраљ-мартри пленумĕ хыççăн та, унăн решенийĕсене тата çав пленумра Сталин йулташ каланисене хисепе илмесĕр, „Çамрăк колхозник" республикăри комсомолĕссене троцкиссемпе, бухаринцăсемпе, буржуалă националиссемпе тата ытти халăх тăшманĕсемпе хайаррăн кĕрешме мобилизацилемен. Хăйĕн чылай статйисенче никам ăнланмала мар сăмах пăтти пĕçерсе, Иашевски çав хушăрах вăрттăн контрреволюцилĕ шухăшсем сарнă.

Иашевскин сăтăрла ĕçĕсем çинчен хыпарсем пулнă. Анчах комсомол Обкомĕн йертсе пыракан работникĕсем „Çамрăк колхозник" ĕçне лайăхлатасси çинчен сăмах çапнă çеç, редакци ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе пăхса тухма, Иашевски çинчен ыйтăва пат татса пама вĕсен алă çĕкленмен. Пачах урăхла: Сымокинпа Терентйĕв Иашевскине хӳтĕленĕ, ăна тӳрре кăларса пынă.

Ăнсăртран пулнă-и вăл? Ăнсăртран мар. ПСÇЛКС Обкомĕн секретарĕ Терентйĕ комсомол организацине халăх тăшманĕсенчен тасатас вырăнне, тĕрĕссипе, вĕсене ответлă ĕçсене кĕртсе пынă, çав вăхăтрах комсомолра ӳснĕ çĕнĕ кадăрсене çул паман. Вырăнсенчен килнĕ сигналсене Терентйĕв хисепе хуман. Комсомола хĕсĕнсе кĕнĕ тăшмансем вара, Терентйĕвăн политикăла суккăрлăхĕпе усă курса, хăйсен сăтăрлă ĕçне туса пынă.

Терентйĕв çинчен калани Прокопйĕва та пĕтĕмĕшпех тивет. Шкулсенче ĕçленĕ тăшмансен хăтланăвĕсене асăрхайман вăл. Терентйĕв пекех, вĕсене ĕçлеме вырăн панă.

Обком бӳровĕн членĕ пулнă Чекмарйов, Шупашкар хула комитечĕн секретарĕнче ĕçленĕ чухне, халăх тăшманĕсене хӳтĕленĕ, пуçламĕш комсомол организацийĕсене тăшмансене тăрă шыв çине кăларма чăрмантарнă. Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕçленĕ фашис Кокăрĕв совет патшалăхĕн налог политикине пăснă, халăха совет влаçне курайми тăвасшăн вăл налогсене саккун кăтартнинчен нумайтарах тӳлеттернĕ. Çак усал тăшмана Чекмарйов, ахаљ аташакан ача вырăнне хурса, комсомолта тăма май панă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи комсомол организацийĕ Бусыгин троцкиса икĕ хут (иртнĕ çулхи çентабĕрте тата кăçалхи май уйăхĕнче) комсомолтан кăларнă. Шупашкар хула комитечĕ çав решенисене пăрахăç тунă, хайар троцкиса комсомолта усранă. Кун пек тĕслĕхсене темĕн чухлех кăтартма пулат.

Иашевскине, Терентйĕва, Прокопйĕва тата Чекмарйова конференцинчен кăларса йанипе комсомолăн облаçри конференцийĕ тĕрĕс турĕ.

Тăшмансене комсомол ĕçне кĕме май панăшăн Сымокин айăпĕ те сахалах мар. Политикăла тимсĕрлĕх, йăвашчунлăх Сымокинăн та пысăк. Иашевскине, вăл хаçата сăтăрланине кура тăркачах тата ун пирки сигналсем пулнă çинчех, çав тери нумай вăхăт хушши комсомол хаçатĕнче ĕçлеме май панăшăн та Сымокин питĕ пысăк айăплă. Шупашкар хулинчи комсомол организацин IV-мĕш конференцийĕнче чылай йулташсем И. Терентйĕв хула комитет пленумĕн членне суйланма тивĕçсĕр пулнине, вăл политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр пулнине тата витĕрех бӳрократланса кайнине фактăсемпе кăтартса, ăна отвод пачĕç. Сымокин ун чухне, Терентйĕва хӳтĕлесе, хĕрӳлĕ сăмах каларĕ. Çак тата ытти йăнăшсемшĕн Сымокинăн конференци умĕнче çирĕп ответ тытмала. Анчах Сымокин йулташ тĕрлĕ сăлтавсем тăрăх конференци умĕнче çирĕп ответ тытассинчен çаплах пăрăнат-ха.

Ăмăртăва йачĕшĕн çеç хутшăннă

ВĂРНАР. Бӳлатăвă йалсоветĕнчи колхозниксем, финанс çекци членĕсем ăнлантарса парса, ĕçре хавхалантарнипе пула, займ, страховкă, йалхуçалăх налогĕн укçисене пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç. Çак вăхăтрах Упнер, Иртеменкасси, Айгăш, Кăкшăм йалсовечĕсенчи колхозниксем займ укçисене пĕр пус та тӳлемен. Çак йалсовечĕсем Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва хутшăнам пек тунă. Анчах хăйсем нимĕн те ĕçлемеççĕ.

Йермошкă йалсоветĕнче те ситменлĕхсем тем чухлех. Хутла пĕлменнисене вĕрентмеççĕ. Шкул çурчĕ йапăх. Ăнлăнтару ĕçне туса пыракансем çук пирки, колхозниксем те, çавăн пекех йединоличниксем те хăйсен парăмĕсене вăхăтра парса татма васкамаççĕ.

Турханпа Иртеменкасси йалсовечĕсен Октăбĕр уйавĕ тĕлне вулав çурчĕсем уçмала пулнă, вĕсем кăна аса та илмеççĕ-ха.

Ст. Филиппăв.

Семинар пулса иртрĕ

ВĂРНАР (хамăр корр.). Çентăбĕрĕн 26-мĕшĕнче районри комсомол комитет секретарĕсемпе комсоргсен тата вулав çурт пуçлăхĕсен семинарĕ пулса иртрĕ.

Семинарта райком секретарĕ Кудрйашов йулташ „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени" çинчен доклад туса пачĕ. Семинарта пулнисем ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлчĕç.

Ст. Улангай.

Библиографи

Буржуалă националиссем тата вĕсен кĕнеки

1927 çулта, буржуалă националиссем партине хирĕç пĕтĕм вăйне хурса çапăçнă вăхăтра, „Чăваш кĕнеки уйрăмĕ" Е Й. Орлова çырнă „Октăбĕрти революципе чăваш хĕрарăмĕ" йатлă кĕнеке кăларнă.

Кĕнекен йа не пăхсан, нимех те çук пек курăнат. Çак иртĕхсе кайнă буржуалă националиска Орловă чейелĕхе хаклама пĕлнĕ. Революцилĕ йатпа витсе контрреволюцилĕ кĕнекене çутта кăларса йанă.

Кĕнекен содержанийĕ—буржуалă националиссен, халăх тăшманĕсен программи, вĕсен трибуни. Автăр хăйĕн кĕнекинче партипе рабочи клас çинчен елеклесе, партипе рабочи клас тăшманĕсем çинчен—троцкиссемпе бухаринцăсем çинчен пĕр сăмах кăларса ӳкермесĕр иртсе кайат. Парти çулпуçĕн Сталин йулташăн ĕçĕсене чăваш хĕрарăмĕнчен пытарса хăварат, чăваш хĕрарăмне ытти халăхсен хĕрарăмĕсенчен уйарса, вырăс хĕрарăмĕсем çинчен елеклесе, интернационалисăма хирĕç кĕрешӳ пуçарса йарат. националисăм урапи çине шыв йарат. Чăваш хĕрарăмĕн ĕлĕкхи пурнăçĕпе революци хыççăнхи пурнăçне суйса кăтартат, унтан мăшкăлат, чăваш хĕрарăмĕн революцилĕ кĕрешӳне пытарса хăварат.

Чăваш хĕрарăмĕн пысăк тăшманĕсене, тĕп тăшманĕсене чаршав хыçне пытарса хăварма тăрăшни — кĕнекен тĕп тĕллевĕ. Ĕлĕк, патша вăхăтĕнче, пурнăç начар пулни тата чăваш хĕрарăмĕн пусмăрти хĕнхурĕ буржуази, патша стройĕ експлоатацилейнинчен мар килнĕ, „упăшка килештермесĕр пашпăрт паманни хĕрарăмăн пурнăçне пит йавăра кӳртсе йанă". Кулаксене те ĕлĕк пурăнма сăмăлах пулман пулат вара, вĕсен те йавăрлăхсем пулнă, кулакла „хĕрарăм упăшкисĕр пуççăр тăкăвăр (догăвăр ĕнтĕ—В. Й) туса тара та тытайман, хăй теллĕн векселсем те илсе парайман". Çапла майпа, чухăн хресчен хĕрарăмĕсене кулаксем мар, такам, никам пĕлмен ĕмĕлке пусмăрласа пурăннă иккен çак айшăнса кайнă националиска каланă тăрăх! Чăваш хĕрарăмĕ, кĕнеке тăрăх, буржуази пулнине те пĕлмест, унпа кĕрешекен рабочи клас çинчен те пĕр сăмахпа та вуласа пĕлме пултараймаст. Хĕрарăм хăйĕн ĕлĕкхи пурнăçне тĕрĕссĕн курмаст, „хĕр пĕчĕк ачана мăйĕнчен чул çакса шыва кайса йани те пулкаланă" çеç.

Çак буржуалă националиска Октăбĕр революци çине тарахат, çавăнпа вăл ăна хăй йат хурат: „икĕ пуçлă ăмăрткайăкĕн çунаттисем хуçăлса анас умăнхи пурнăç" тесе, революци умĕнхи пурнăçа хăйĕн йачĕпе тӳррĕмĕн калассинчен пăрăнат.

Ĕлĕкхи пурнăç йăвăр пулнине пытарма май пулман пирки, Орловă националиска хĕнхурлăхăн сăлтавне вăрçă çине йавантарма пăхат. „1914 çулта, ийулĕн 20-мĕш кунĕнче, хĕрсе тырă вырнă вăхăтра вăрçă пуçланса кайрĕ. Амăшĕсемпе ачисен кĕтмен çĕртен йăвăр пурнăç пуçланса кайрĕ" тесе лĕпĕртетет. Хăйĕн ĕнси çинче тăшман мăшкăлне тӳссе иртернĕ чăваш хĕрарăмĕ ун пек каланине ĕненес çук! Чăваш хĕрарăмĕ кĕлте турттарма пĕлмест, капан тума пĕлмест, тени те чăваш хĕрарăмĕ çинчен елеклени пулат. Чăваш хĕрарăмĕ мар, буржуази хĕрарăмĕсем вара чăнахах та кĕлте кӳме те, капан хывма та пĕлмен.

Ăнсăртран мар ĕнтĕ çак националискă коммунуиссен партийĕ çинчен елеклесе, ес-ерсене мухтани те. Ес-ерсен представитĕлĕ А. Платонăвă тăрăшнипе чăваш хĕрарăмĕ революци тунă пулат вара. „А. Платонăвă вăл чăваш хĕрĕ пулнă. Вăл Хочашра, Йетĕрне уйесĕнче учитĕлницăра пуранатчĕ. Вăрçă умĕн ăна хупса лартрĕç. Вăл социал-революционерсен партинче тăнă".

Паллах ĕнтĕ, çакăн пек тискер националиссене пуринчен ытла рабочи клас гегемонине хирĕç кĕрешни кирлĕ. Çавăнпа вăл „1917 çулта, хĕрарăмсем пуçарса йанипе, патша йĕркийĕ ишĕлсе анчĕ" тесе çырат. „Вирйал обшчĕствисем" тăвассишĕн вăйне хурса кĕрешеççĕ. Чăваш халăхĕ автономи илни мĕнле вырăн йышăнса тăнине тĕрĕс ăнланасран шикленсе, вăл ăрланăва пăтратса йама тăрăшат. Пĕр çĕрте: Чăваш ĕççынни хăйне валљи автономи илсе, çĕнĕ пурнăç йума пуçланă чух питĕ хăрушă выçлăх чăтрĕ" тесе автономин хакне çухатма пăхат, тепĕр çĕрте: „Вĕсемшĕн Октăбĕр те 1920 çулта ийулĕн 6-мĕш кунĕнче тин çитнĕ" тесе, Октăбĕр революци чăваш хĕрарăмне нимĕн те паман, тесе сӳпĕлтетет.

Йулашкинчен вара Орловă хăйĕн тусĕсене, буржуалă националиссене—Л. Лукинпа Зайцĕва мухтаса илет. Вырăс халăхĕ çине елеклет.

Хушăран каласан, кĕкенĕрĕ пĕр усăлă вырăн пур, вăл—А. Григорйĕвă буржуалă националискăн ирсĕр ĕçне çутатса пани. Григорйĕвă Хĕрарăм пайĕнче ĕçленĕ вăхăтра конференци пулса иртнĕ. „Конференцине 300 çын ытла пухăннă. Ĕçлеме çăмăл пултăр тесе (?) конференци икĕ пайа уйăрăлса, икĕ пӳлĕмре ĕçленĕ. Пĕр пӳлĕмĕнче чăвашла пĕлмен вырăс хĕрарăмĕсем, тепĕр пӳлĕмĕнче вырăсла пĕлмен чăваш хĕрарăмĕсем". Çакăн пек ĕçленĕ ĕлĕкрех А. Григорйĕвă, Орловă националискăсем.

Çӳлте асăннă кĕнекен [illegible] çинчен урăх чарăнса [illegible] та çителĕклĕ. Кунта çакна кăна асанса хăварма кирлĕ: А. Григорйĕвă, Е. Орловă буржуалă националискăсемшĕн текех парти ретĕнче вырăн пулмала мар.

В. Йаковлĕв.

Китайри вăрçă

Китайăн 8-мĕш çарĕ çĕнĕ çĕнтерӳ тунă

Китай пичечĕ Китай çарĕсем Шаљси провинцинче (Çурçĕр Китай) çĕнĕ çĕнтерӳ туни çинчен пĕлтереççĕ. Китайăн Чжу Де йертсе пыракан 8-мĕш çарĕн чаçĕсем тата Гео Гуй-узе генерал йертсе пыракан 84-мĕш дивизи чаçĕсем Йанљмынљгуанљ хули патĕнче Йапони çарĕсен механизацилĕ отрйадне тата 5-мĕш дивизин виçĕ полкне аркатса тăкмалах çапса çĕмĕрнĕ.

Китай хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, йапонцăсем Танљцзин — Пукоу чукун çулĕ тăрăх пыраççĕ. Çентабĕрĕн 30-мĕшĕнче Санљйуанљ хулин районĕнче (Хебей тата Шанљдун провинцисен чиккинче) вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Бейпин—Ханљкоу чукун çулĕ тăрăх кайакан Йапони çарĕсем Дунгуан пунктне туртса илнĕ (Шанљдун провинцин чиккинчен 50 километртра ларать).

Бейпин—Суййуанљ чукун çулĕн тăрăхĕнче хайар çапăçусем пулса иртнĕ, кунта Циндизӳнљрен Гуйхуа (Суййуанљ провинцин столици) патнеле кайма хăтланакан йапонцăсене хирĕç Китай çарĕсем питĕ хытă çапăçнă.

Шанхай фронтĕнче фронтăн Љухе йалĕнчен пуçласа Бацзецйаоранљ (Шанхайран çурçĕрелĕ) хĕвеланăçнеле ларакан пункт патне çитекен мĕн пур лини тăрăх пысăк çапăçусем пулнă. Йапони танкĕсем Сицзйанцзе (Лодйанљпе Љуханљ хушшинчи çурма çулта) патнеле кусма хăтланса пăхнă. Пралук картана çĕмĕрсе кĕрес тесе, темиçе танк Китай окопĕсен çывăхнех пынă. Китай артиллеринчен перcе икĕ танкне сийен тунă, ыттисен ирексĕрех кайала çаврăнса тарма тивнĕ. (ТАСС).

Испани ыйтувĕ тăрăх йышăннă резољуцине Лигă наци комиççийĕ ырланă

ЖЕНЕВĂ, октăберĕн 1-ш (ТАСС). Лигă нацин VI-мĕш (политикăлă) комиççийĕ ĕнер каçхине, нумайччен прениcем пынă хыççăн, Испани ыйтувĕ тăрăх йышăннă резољуци пройектне ырланă. Великобритани, Франци тата ССР Сойузĕн делегацийĕсем резољуцин хăшпĕр пайне фашисла патшалăхсен тусĕсем критиклеме хăтланнине хирĕç пĕрле тухса кăлани, тата Швейцарипе Йугослави делегачĕсем вĕсен хутне кĕни пренисен тĕп уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Фашисла патшалăхсем йенче тăракансем резољуцин 7-мĕш пункчĕпе уйрăмах хытă килĕшмен (çав пунктра правитĕлтствăсене малтан йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çĕнĕ вăй хурса кĕрешме чĕннĕ тата йенчен „кĕске вăхăт хушшинчех“ лайăх резуљтат тăваймасан, вара Испани ĕçне хутшăнас мар системăна пĕтерсе хумала пулать, тесе кăтартса панă). Çав ыйту тăрăх Литвинăв йулташ тухса каласнă, вăл 7-мĕш пункта йышăнма çине тăрса ыйтнă. Резољуцине пурте пĕр сасăпа йышăннă, Австри, Венгри, Болгари, Португали, Ирланди тата Кăнтăр-Африкă Сойузĕн делегачĕсем сасăламасăр тытăнса тăнă.

Испани парламĕнчĕн çеççийĕ уçăлнă

ПАРИЖ, октăберĕн 1-ш (ТАСС). Францири Гавас телеграф агенстви пĕлтернĕ тăрăх, пайан питĕ чаплă лару-тăрура Испани кортесĕсен (парламĕнчĕн) çеççийĕ уçăлнă.

Уçăлакан çеççине саламлама тата кортессен депутачĕсене йуратса ырă сунма Валенси хулинчи мĕн пур халăх урамсемпе плошчĕдсене тухнă.

Çеççине уçса, кортессен председатăлĕ Мартинес Баррио хăйĕн малтанхи сăмахĕсене „пур фронтсенче те паттăрăн çапăçакан мухтавлă республикă çарне“ саламланă. Баррио сăмахне çеççине пухăннисем хаваслăнса хĕрӳлĕн ала çупса кĕтсе илнĕ.

Баррио сăмах каласа пĕтернĕ хыççăн, çеççи чылай саккун пройекчĕсем çирĕплетнĕ, вăл шутран республикăлă Испанин мĕн пур территоринче чрезвычайлă йĕркене малала тăсасси çинчен каларнă саккун пройектне те çирĕплетнĕ.

Министрсен совечĕн председатĕлĕ Хуан Негрин хăй йертсе пыракан правитĕлствă ĕçĕ çинчен чарăнса тăнă. Вăл: „Епĕр пурте пĕр шухăшлă пулса миршĕн, пире йĕркелĕх, тĕреслĕх тата епĕр никама пăхăнмала мар тума гаранти паракан миршĕн тăрăшатпăр. Епĕр пирĕн халăха хăйĕн демократилĕ учрежденийĕсем урлă пирĕн халăх килĕштерекен економикăлă тата социаллă стройа пурнăçа кĕртме гаранти паракан миршĕн тăрăшатпăр“,—тесе каланă.

Хĕрлĕ йалавлă ансамбăљ Прагă гарнизонĕнче концерт панă

ПРАГĂ, октăберĕн 1-ш (ТАСС). Ĕнер Хĕрлĕ Çар йуррисемпе ташшисен хĕрлĕ йалавлă ансамбăлĕ икĕ концерт панă: кăнтăрла—Прагă гарнизонĕнчи чаçсем валљљи, каçхине—хула халăхĕ валљљи. Кăнтăрлахи концертра Чехословаки çарĕнчи офицерсемпе салтаксем пулнă.

Ансамбăљ руководитĕлĕ ССР Сойузĕн халăх артисĕ Александрăв профессăр концерт пуçланас умĕн ССР Сойузĕпе туслă пурăнакан Чехословаки республикĕн çарне саламланă. Салама ответлесе Хĕрлĕ Çара хисеплесе зал „урра“ кăшкăрнă. Концерт организатăрĕсем—Прагă гарнизонĕн командованийĕ—ансамбăле чечексем пырса тыттарнă.

Ансамбăљ йатарласа тунă программă тăрăх концерт панă, вăл программăра пуринчен ытларах Хĕрлĕ Çар йуррисем, поход тата халăх йуррисем пулнă. Программăна ташăсем кĕртмен, мĕншĕн тесен Чехословаки республикĕн малтанхи президенчĕ пулнă Масарик вилнĕ май, Чехословаки çарĕнче халљхи вăхăтра траур пырать. Ансамбăљ выљљаса панă кашни номĕре аудитори хаваслăн йышăннă, тепĕр хут выљљаса пама ыйтнă. „Песня о Сталине“, „Песня о Ворошилове“, „Партизанская“ тата „Полюшко-поле“ йурăсем уйрăмах хытă килĕшнĕ.

Концерт пĕтнĕ хыççăн гарнизон командованийĕ Хĕрлĕ Çар ансамбăљне хисеплесе банкет тунă. Нацилĕ оборонă министерствин представитĕлĕ Воженилек генерал хăнасене ăшă сăмахсемпе саламланă. Хăйĕн ответлă сăмахĕнче Александрăв профессăр, Чехословаки республикĕн территоринче ансамбăле калама çук ăшшăн тата туслăн йышăннăшăн Чехословаки правитĕлствипе Чехословаки çар командованине тав тунă. Банкет туслă лару-тăрура пулса иртнĕ.

Каçхи концерт, малтанхисем пек те мар, тата ăнăçлăрах пулнă. Публикă пĕтĕм концерт тăршĕпех хаваслăнса хĕрӳлĕн ала çупнă. Концерта радио тăрăх пĕтĕм Чехословакине трансљацийе панă.

Совет патриотисăмĕн примерĕ

ХАБАРОВСК, сентăберĕн 29-мĕш (ТАСС). Гарнизон рабочийĕ Мелникăв йулташ каçхине чылай тĕттĕмленсен ĕçрен таврăннă. Вăл Хабаровскăн пĕр урамĕпе утнă. Пĕр туса çитерейман çурт патĕнчен иртнĕ чухне Мелникăв тĕлĕнмеле сас-чĕвĕ илтнĕ. Вăл çурта кĕрсе пăхма шутланă. Çурта шала кĕрсен Мелникăв пытаннă çынна курнă. Вăл палламан çын кунта çĕр каçма кĕрсе вырнаçнă пулмала.

— Камсем есĕр тата сире кунта мĕн кирлĕ?—ыйтнă Мелникăв.

— Епĕ ĕç шырама килтĕм, хватер çук,—ответленĕ палламан çын.

Вăл вара ĕççĕр йулнă çын пек пулса, Мелникăвран пĕр 3—4 кун хушши хватер йама ыйтма тытăннă. Палламан çын Мелникăва шанчăкçăр çын пек туйăннă.

— Йурать, епĕ сире хватере илсе кайăп,—тенĕ Мелникăв, палламан çынна пĕрле илсе кайнă. Килне кĕрсен Мелникăв пуртă илнĕ те шанчăксăр çынна хăйпе пĕрле милици управленине утма хушнă. Палламан çын, ĕç начаррине курса, „хăй камне каланă“, вăл, имĕш вăрă пулать, ăна арĕслесе тĕрмене хупма пултараççĕ. „Вăрă“ Мелникăвăранљ, малала нихçан та вăрламастăп, тӳрĕ пурăнма пуçлатăп, йар, тесе куççулпе йалăнма тытăннă.

Анчах Мелникăв йулташ çирĕп тăнă. Вара ăна, „ĕççĕр йулнă çын“ хăратма пикеннĕ. Анчах хăратнипе ним ĕç те тухманнине кура: малтан 50 тенкĕ, унтан 100, йулашкинчен 300 тенкĕ пама тăнă.

Мелникăв йулташ ăна ирсĕррĕн сутăн илме тăнине тавăрса: „Епĕ тăван çĕршыва сутмастăп“, тесе, шанчăксăр çынна аллисене çулеле тăратма хушса, милици управленине илсе кайнă.

Çав çынна кайранљ Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн оргăнне илсе кайса тĕпченĕ. Çав суйа вăрă совет чикки урлă халљ çеç каçнă пĕр урăх çĕршыв шпионĕ пулнă.

Мелникăв йулташ тăван çĕршыв умĕнче хăйĕн граждăнла тивĕçне тӳрĕ пурăнăçа кĕртнĕ. Унăн паттăр ĕçĕ совет патриотисăмĕн таса тĕсĕ пулса тăрать. Мелникăв пек паттăрсем Совет Инçет-Хĕвелтухăçĕнче тем чухлех.

Чехословаки çарĕн маневăрĕсем.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикă президенчĕ Едуард Бенеш (варринче) тата Наци оборони министăрĕ Франсуа Махник маневăрсене йертсе пыракан Адаљберта Луша генерал ăнлантарса панине итлеççĕ. (Сойузфото).

Громăв йулташ Çурçĕр полюсĕ урлă вĕçни çинчен доклад тунă

ДОН-ÇИ РОСТОВ, октăберĕн 1-мĕш (ТАСС). Сочире канса пурăнакан Совет Сойузĕн Геройĕ Громăв йулташ çентăберĕн 30-мĕшĕнче хăй Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Çурçĕр Америкăна вĕçни çинчен доклад туса панă.

Цирк çурчĕ канакансемпе тата хулари ĕççыннисемпе тулса ларнă. 1.500 çын тăван çĕршывăн хăйулă ывăлне тăвăллăн ала çупса кĕтсе илнĕ. Громăв йулташа чечек çыххисем пырса тыттарнă.

— Ийулĕн 10-мĕш—манăн пурнăçра чи хаваслă кун пулса тăрать,—тесе каланă Громăв йулташ.—Çав кун епĕ Кремĕлте пултăм, унта хаклă аслă Сталинпа пĕрле пирĕн вĕçевĕн планне сӳтсе-йаврĕç.

Доклад итлеме пухăннисене Громăв йулташ вĕçев çинчен тĕплĕн каласа кăтартнă. Доклад хыççăн вуншар ыйтусем панă. Малашне мĕнле ĕç тума шутлани çинчен ыйтнине хирĕç Громăв йулташ çапла ответленĕ:

— Епĕр Сталин йулташран пире малашнехи рекордлă вĕçевсен планне туса хатĕрлеме ирĕк пама ыйтрăмăр. Ăна тума ирĕк панă ĕнтĕ,—тенĕ.

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче хутшăнма ыйтса 10.700 зайавкă панă

Вуншар пин колхозсем, совхозсем тата йалхуçалăхĕнче малта пыракан уйрăм çынсем Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хатĕрленеççĕ. Çентăберĕн йулашки вунăкун хушшинче тăватă пине йахăн зайавлени панă. Октăберĕн 1-мĕшне пĕтĕмпе 10.700 зайавленине йахăн пухăннă. Колхозсенчен — 5.143, колхозри таварлă фермăсенчен — 1.170, йалхуçалăхĕнче малта пыракан уйрăм çынсенчен 4.260 зайавлени илнĕ.

Ку хисепсем Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма права илессишĕн пĕтĕм халăх хушшинче сарăлнă колхозсĕн социалисăмлă ăмăртувăн çитĕнӳне пĕтĕмĕшпех кăтартмаççĕ-ха. Нумай районсенче вуншар колхозсем выставкăра пулма тивĕçлĕ ĕçсем тунă, анчах хăшпĕр хуçалăхсем çеç зайавлени панă. Çĕрĕç оргăнĕсем тата выставкă комитечĕсем зайавленисене тĕрĕслесе йĕркелес ĕçе тăсаççĕ. 4 пин колхоза йахăн панă зайавленисене йĕркелемен. (ТАСС).

„Н—209“ самољота шырама

Грациански йулташăн вĕçевĕ

Октăберĕн 1-мĕшĕнче Çурçĕр Тинĕс çулĕн Тĕп Управлени начаљникĕ О. Й. Шмидт йулташ Фербенксран (Аљаскă) Грациански йулташ „Н-207“ амфиби çинче çĕнĕ вĕçев туни çинчен телеграммă илнĕ.

Çентăберĕн 29-мĕшĕнче „Н-207“ самољот Барроу мысĕн таврашĕнче 4 сехет хушши вĕçнĕ. Грациански йулташ тинĕсре пĕтĕм районĕпе тĕтре тăни çинчен пĕлтерет. Барроу мысĕнчен Халкетт мысĕ таран 15 милре çырансен хĕрри тăрăх çуркаланнă пăр татăкĕ пырать. Грациански љотчик вĕçме йурăхлă çанталăка кĕтет.

* * *

Совет Сойузĕн Геройĕн Шевељов йулташăн сывлăш експедицийĕ вĕçме йурăхлă çанталăк пулманнипе Рудољф утравĕ çинчех ларать. (ТАСС).

Гитлер Италине кайма хатĕрленет

БЕРЛИН, октăберĕн 1-мĕш (ТАСС). Пайан официаллă пĕлтернĕ тăрăх, Муссолини чĕннипе Гитлер Италине кайма хатĕрленет. Хăш числара тухса кайассине кăтартман.

Муссолини Рима тухса кайнă

БЕРЛИН, çентăберĕн 29-мĕш (ТАСС). Муссолинине хисеплесе пайан Берлинра çар парачĕ пулса иртнĕ, парада тĕрлĕ хатĕрсемпе хĕçпăшалланнă çарсенчен 14 пин салтак хутшăннă. Парад хыççăн Муссолинипе Гитлер тепĕр хут курса канашланă. Çав кунах Муссолини Рима тухса кайнă.

Фермă 9 пин тенкĕ тупăш парать

КӲКЕÇ (хамăр инфор.). Шупашкар районĕнчи Марсељски йачĕпе тăракан колхозăн пахча-çимĕç фермы пур. Кăçал унта пахча-çимĕç питĕ ăнса пулнă. Фермă кăçал çичĕ пин тенкĕлĕх тупăш панă. Халĕ сутмалли пахча-çимĕç тата 2 пин тенкĕлĕх пур. Çапла фермă 9 пин тенкĕ тупăш парать.

Темпăвцăсен пысăк çĕнтерĕвĕ

Октăберĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарти „Темп“ обшчĕствин футболисĕсем Хусанти „Спартак“ командипе тĕл пулса выљарĕç.

Вăйă малтанах хĕрӳлĕ пуçланчĕ. Хусансем шупашкарсене хĕссе пыма тытăнчĕç. Вăйă пуçланни нумай вăхăт иртмерĕ, спартакăвцăсем темпăвцăсен алăкне пĕррĕмĕш мечкă тапса кĕртрĕç. Шупашкарсем вăйа хăйсен аллине илчĕç. Вăхăт нумай та иртмерĕ, темпăвцăсем хусансен алăкне пĕррĕмĕш мечкă тапса кĕртрĕç. Спартакăвцăсем кĕтмен çĕртен тавлашма, вăйă йĕркине пăсма пуçларĕç. Сылтăм йенче нападенире выљакан хăй ирĕкĕпе вăйăран тухса кайма хăтланчĕ. Темпăвцăсем вăйă йĕркине çирĕп тытса пычĕç. Пĕррĕмĕш таймра вĕсем каллех хусансен алăкне тепĕр мечкă тапса кĕртрĕç. Вăйă шучĕ 2:1 шупашкарсене усăлă пулса тăчĕ.

Иккĕмĕш таймра Хусан команди вăйă шутне танаштарма хăтланчĕ. Анчах ĕç тухмасть, ăнмасть. Вăйă пуçлансан малтанхи минутсенчех шупашкарсем хусансен алăкне тепĕр мечкă тапса кĕртрĕç. Унтан тата тепĕр мечкă тапса кĕртрĕç, вăйă шучĕ 4:1 пулса тăчĕ. Анчах выљанă вăхăтра Шупашкарти „Темп“ футболисĕсем пĕр йăнăш турĕç. Вĕсем сарăмсăр хăйсен алăкне хăйсемех пĕр мечкă кĕртрĕç.

Хатĕрленӳ ĕçĕ çителĕксĕр-ха

ВĂРНАР. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренме районĕпе 300 кружок ытла организациленĕ. Районра 59 суйлав участки уйăрнă. Кашни участкăрах суйлав иртермелли çуртсене те уйăрса хунă.

Акă, Айкăш йалсоветĕнче 13 кружок ĕçлет. Вăтамран кружоксенче вĕренекенсен шутне 20—25 избиратĕл таран йаваçтарнă. Çараклă Вăрман пунктĕнчи рабочисем хушшинче 7 кружок йĕркелĕ ĕçлесе пырать. 21 агитатăр уйăрнă. Çавсем пекех Мамалай, Хирпуç йалсоветĕнчи кружоксем те йĕркелĕ ĕçлесе пыраççĕ.

Хăш-пĕр йалсовечĕсенче избиратĕлсен спискисене туса çитерменĕ. Айкăш йалсовечĕ çентăберĕн 29-мĕшне туса çитерчĕ. 12 йалсоветĕнче суйлав комиççисен спискине райĕçтăвкома тăратнă.

Анчах та Волонторти пуçламĕш парторганизацинче 8 коммунис тăраççĕ пулсан та, суйлав саккунне вĕренес ĕç калама çук йапăх пырать. Андрейĕвпа Трофимăва парторганизацин пухувĕ колхозниксем хушшинче ăнлантарма хушнă. Вĕсем, хăйсем тĕплĕ пĕлеймен пирки, ăнлантару ĕçне тытăнман та. Вăрманкасри Бубнов йачĕпе тăракан колхозра та кружоксем организациленĕ, анчах агитатăрсем çук пирки ĕçлемеççĕ. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Казаков ĕçлемест.

Йев. Воробйов.

Спорт

„Красная Чувашия“ тата „Чăваш Коммунĕ“ хаçатсен призне спартаковцăсем илчĕç

Çентăберĕн 30-мĕшĕнче „Красная Чувашия“ тата „Чăваш Коммунĕ“ хаçатсен призне илмели чупу пулса иртрĕ. Ăмăртăва арçынсен 13 командă (130 çын), хĕрарăмсен 10 (50 çын) командă хутшăнчĕç. Пуринчен ытла „Спартак“ обшчĕстви нумай командă кăларнă.

Арçынсем 1200 метра, хĕрарăмсем 700 метра малтан чупса тухассишĕн ăмăртрĕç. Ăмăртура „Спартак“ обшчĕствин пĕррĕмĕш команди 1200 метра 39,080 минутра чупса тухса пĕррĕмĕш вырăна йышăнчĕ. Ку командă „Красная Чувашия“ тата „Чăваш Коммунĕ“ хаçатсен куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавнĕ илчĕ. Иккĕмĕш вырăна Йетĕрнери педучилишчăри физкуљтурă уйрăмĕн коллективĕ, виççĕмĕш вырăна Шупашкарти „Темп“ обшчĕствин команди, 4-мĕш вырăна Пединститут, 5-мĕш вырăна Йалхуçалăх Институчĕ, 6-мĕш вырăна Йалхуçалăх рабфакĕн коллективĕсем йышăнчĕç. Ăмăртăва хутшăннă Кооптехникум, физкуљтурă инструктăрĕсен курсĕ, Педрабфак, Коммунисла йалхуçалăх Аслă шкулĕн коллективĕсем, „Спартак“ обшчĕствин 2—3-мĕш командисем, „Динамо“ команди 7—13-мĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Хĕрарăм командисенчен те спартакăвцăсем пĕррĕмĕш вырăна тухрĕç. „Спартак“ обшчĕствин команди 700 метра 11,36 минутра чупса тухрĕ. Йетĕрнери педучилишчăри физкуљтурă уйрăмĕн коллективĕн команди иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Ку командă пĕлтĕр пĕррĕмĕш вырăнта пулнă. Виççĕмĕш вырăна кооптехникумри физкуљтурă коллективĕ, тăваттăмĕш вырăна йалхуçалăх рабфакĕн коллективĕ йышăнчĕç. Ытти коллективсемпе спорт обшчĕствин командисем 5—10-мĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Ăмăртăва организацилес ĕçре çитменлехсем те чылаи пулчĕç. Физкуљтурăпа спорт комитечĕ çак пысăк ĕçе иртерме кирлĕ пек хатĕрленмен. Çакна Йетĕрнерен килнĕ командăна начар кĕтсе илни те лайăх кăтартса парать.

Пысăкрах ĕçе лартаççĕ

КӲКЕÇ (хамăр инфор.) Илйа Йегорăв Чăкăр йалсоветĕнчи Марсељски йачĕпе тăракан колхоз председатĕлĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ ăна Шупашкар райĕçтăвкомĕ районти çĕрĕç пайĕн пуçлăхне лартнă.

Сменăра 35 тоннă

Вăрнарти машинăпа трактăр станцинчи 12-ш бригадăри машиновед Семен Антонăв «МК—1100» молотилкăпа сменăра 35-шер тоннă авăн çапать. Вăл хăйĕн ĕç нормине 350 процент тултарать. (Хамăр инфор.).

Ответлă редактăр заместитĕлĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Сĕнтĕрвăрринчи бољницана

ШОФĔР КИРЛĔ

Ĕçукçи пирки аслă тухтăр помошникĕпе каласса татăлмала.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан

сăран савăтне

ИКĔ СЧЕТОВОД КИРЛĔ

Октăберĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре Шупашкарти Халăх сучĕн çуртĕнче (Хĕрлĕ площчĕд).

Çурт-йĕр строитĕлствипе благоустройствă çекцийĕсен

пĕрлешӳлĕ пленумĕ пулать

Çак ыйтупа:

1. Архитектăрсен 1-мĕш сйесĕн решенийĕсем май умра тăракан архитектурăпа строитĕлствă практики (архитектăрсен сйесĕнче пулнă Сергейĕв инженер архитектăр доклачĕ).

Пленума çӳлте асăннă çекцисен членĕсене тата Шупашкарти инженерла-техникла работниксене пыма чĕнеççĕ.

Хула совечĕ.

Шупашкарти „Художник“ ертелне

производствă бухгалтерине пĕлекен

БУХГАЛТĔР ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Çак адрĕспа ыйтмала: Шупашкар, Розă Љуксембург урамĕ, 3 (б) № çурт

ПРАВЛЕНИ.

Октăберĕн 3, 5 тата 6-мĕшĕсенче

Пионерсен Тĕп Çуртĕнче

Ачасен Чăваш Республикĕнчи Патшалăх театрĕ (ТЮЗ)

ДЕТСТВО МАРШАЛА

йатлă спектакăљ кăтартать.

Автăр ВСЕВОЛОЖСКИЙ.

Спектакăле НИКИТИН йертсе пырать.

Художествă руководитĕлĕ ПЕТРОВ.

Каçхине 6 сехетре пуçланать.

Кассă 11 сехетрен уçă.

Коллективлă зайавкăсемпе билет хакĕ 50 процент йӳнĕ.

ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 7. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиза. Заказ № 2193. Тираж 11100. Б.58—92 см, п. л.